Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 СЕНТЯБРЕН 12 ТУНТИКУН 211 (5024) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, ялхуçалăх пайĕн—4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—7—97, ялкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн—6—23.

Ответлă та хисеплĕ ĕç

Совет Союзĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ пирĕн пурнăçра пит те паллă, пысăк вырăнта тăракан саккунсем йышăнса хăварчĕ: „Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн 1938 çулти пĕтĕм государство бюджечĕ çинчен", „ССРС, союзлă тата автономлă республикăсен судоустройстви çинчен", „ССРС гражданстви çинчен", „ССР Союзĕ урăх çĕршывсемпе тунă договорсене ратификацилес тата денонсацилес йĕрке çинчен", „Уйрăм хуçалăхсен лашисем çине государство налогĕ хурасси çинчен", „Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставки çинчен" т. ыт. те.

Совет халăхĕ çак саккунсене пысăк хавасланупа кĕтсе илчĕ. Совет саккунĕсем халăх интересне сыхлаççĕ, çĕршыван вăй-хăватне ÿстереççĕ. Совет Союзĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене пурнăçа кĕрсе пыни пирĕн çĕршыв оборонине тĕрекне вăйлатать, тĕнчери мир пурнăçшăн кĕрешес, фашисла агрессорсене хирĕç кĕрешес ĕçре Совет Союзĕн вырăнне татах пысăклатать, çĕршыван материаллă пурлăхне татах та нумай пуянлатать. Çавăнпа ĕнтĕ вăл саккунсене пирĕн халăх пĕтĕм кăмăлтан ырлать, производствăра ĕçĕнче çĕнĕрен çĕнĕ çĕнтерÿсем тунипе ответлет.

Пирĕн пайанхи ответлă, хисеплĕ ĕç—ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çесси йышăннă саккунсем çинчен ĕçсыннисене тĕплĕн ăнлантарса парасси, вăл саккунсене пурнăçа кĕртсе пырас тĕлĕшпе вирлĕн ĕçлесси.

ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ Совет Союзĕн 1938 çулти бюджетне çирĕплетрĕ. Бюджет саккун пулса тăчĕ. Бюджета ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырас ĕç финанс дисциплинине çирĕплетме хушать. Ку тĕлĕшпе пирĕн питех те нумай ĕçлемеле-ха. Чăваш республикĕ виççĕмĕш кварталăн финанс планне çентябрĕн 1-мĕш тĕлне 40 процент çеç тултарнă. Уйрăмах Ишлей, Турхан, Канаш, Вăрмар, Йĕпреç районĕсем пысăк парамра тăраççĕ. Вăл районсен государство бюджетне пурнăçлас ĕçе укçа-тенкĕ пухассине вăйлатас ĕçпе мĕнле çыхăнтарса пымаллине Шăнкăртам районĕнчен вĕренмеле. Шăнкăртам районĕ III-мĕш квартал финанс планне çентябрĕн 1-мĕшнех 97,8 процент тултарчĕ.

Шăнкăртам районĕнче ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене ĕçсыннисене лайăх ăнлантарса парас шутпа районти парти активĕпе агитаторсен виçĕ кунлăх семинарне туса ирттернĕ. Халĕ агитаторсем валли уйрăм кружоксем тунă, вĕсенче занятисем 7-шер хут пулаççĕ. Çесси материалĕсене вĕренме колхозсенче агитаторласах кружоксем тунă.

Елĕк районĕнче çентябрĕн 3—4-мĕшсенче 20 ялсоветра совет кунĕсем туса ирттернĕ. Вăл кунсенче ялсовет членĕсене, секцисемпе депутат группин членĕсене тата ял активне Çесси ĕçĕсем çинчен ăнлантарса панă. Çесси йышăннă саккунсене ăнлантарса парас майпа 224 çĕрте хаçат-журналсем вуласа панă, 59 номер стена хаçачĕ кăларнă.

Шăхасан райĕçтăвкомĕ ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсем çинчен анлăн ăнлантарса панă майпа, хуçалăхла-политикăлла кампанисене пурне те пурнăçа ăнăçлăн кĕртсе пыракан ялсоветсене пама ятарласа куçса çÿрекен хĕрлĕ ялав тума йышăннă. Халĕ ку районта ялсоветсем пурте çак ялавшăн пĕр пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Райĕçтăвком çентябрĕн 2-мĕшĕнче пулса иртнĕ ларăвĕнче III-мĕш квартал финанс планне 88 процент тултарнăшăн, Чуракасси ялсоветне райĕçтăвкомăн куçса çÿрекен хĕрлĕ ялавне пама турĕ. Çакăн пек пата тĕслĕхсем татах та нумай.

Уйрăм хуçалăх лашисем çине налог хурасси пирки йышăннă саккун çинчен ăнлантарса панă май, чылай районсенче колхоз йухăмĕ вăйланни палăрать. Юлашки кунсенче Елĕк районĕнче 68 хуçалăх, Сĕнтĕрвăрри районĕнче 82 хуçалăх, Тăвăркас районĕнче 154 хуçалăх колхоза кĕнĕ. Çавăн пекех, Çĕмĕрле, Шăхасан, Канаш т. ыт. районсенче те колхоза кĕрессин вăйлансах пырать.

Çак çитĕнÿсене ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çесси йышăннă саккунсем çинчен ĕçсыннисене анлăн ăнлантарса панă майпа, масса хушшинче тимлĕн ĕçленипе тунă.

Анчах çапах та пирĕн республикăра ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çесси йышăннă саккунсене ăнлантарса парасси пайанхи куна çителеклĕн саралнă теме май çук.

Судоустройство пирки йышăннă саккун çинчен ăнлантарса парас ĕçех илер. Вăл саккун питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл судсен ĕçне тата ĕçĕн тĕп йĕркисене кăтартса, татса парать. Совет суйнисем халăх сучĕсене пурне те тивĕç, тÿрех тата пĕртан суйлав правипе вăрттăн сасăласа суйласа лартаççĕ. Халăх сучĕсен суйлавĕсене ирттерме халех хатĕрленме тытăнмала. Халăх сучĕсене тивĕçлĕ çынсене çеç, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн чĕререн тăракан çынсене суйлас, революцилле саккунлăха тата çÿлерех çĕклентерес тесен, „ССРС, союзлă тата автономлă республикăсен судоустройстви" çинчен йышăннă саккуна халăх хушшинче тĕплĕн ăнлантарса парас пулать. Ку вăл хисеплĕ те ответлă ĕç. Партире тăракан тата партие тăман агитаторсен, революцилĕ саккунлăх секци членĕсен, халăх сучĕсенче тата прокуратурăра ĕçлекенсен çак ĕçе мĕн пур пултарулăхпа, пĕтĕм вăй-хăватран тытăнас пулать. Анчах вăл ĕç пайана çитсе те тивĕçлипе саралса пымасть-ха. Ялсоветсенче, революцилĕ саккунлăх секци членĕсем хушшинче çеç мар, халăх сучĕсенче ĕçлекенсен коллективĕсем, уйрăмах ЧАССР Юстици Халăх Комиссариатĕнче ĕçлекенсем хăйсем те вăл саккуна тĕплĕн вĕренме тытăнман-ха.

ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене ĕçсыннисем хушшинче ăнлантарса парса, вĕсене пурнăçлассишĕн кĕрешесси—политикăлла пысăк ĕç. Пирĕн агитаторсем, партин пуçламĕш организацийĕсем, парти райкомĕсем Верховнăй Советсен суйлавĕсем вăхăтĕнче агитаци ĕçне анлăн сарса, ку тĕлĕшпе пуян опыт илчĕç. Халĕ çак опытпа Çесси йышăннă саккунсем çинчен ăнлантарса парас ĕçре вăйлăн усă курас пулать. Хуласенче, хапрăк-савăтсенче, ялсенче, колхозсенче агитаци ĕçне, массăллă ăнлантару ĕçне халĕхи вăхăтра Верховнăй Советсен суйлавĕ вăхăтĕнчинчен пĕре те кайа мар, çапла чухнехи пекех анлăн йĕркелемеле. Совет Союзĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене пĕлмесĕр пĕр çын та ан юлтăр. Халăх интересне сыхлакан, халăх пурнă не лайăхлатма пулăшакан саккунсене кашни ĕçсынни тĕплĕн пĕлмеле.

Пирĕн тăван çĕршыван саккунĕсем халăха телейлĕ пурнăç кÿреççĕ, социализмлă çĕршыван саккунĕсем халăха савăнтараççĕ, çавна кура халăх хăйен тăван çĕршывне татăх та ытларах юрать. Вăл саккунсем çинчен анлăн ăнлантарса пани, вăл саккунсене пурнăçа кĕртсе пыни—совет халăхĕн политикăлла пĕрлĕхне тата хытăрах çирĕплетĕ, Ленин—Сталин партийĕ тавра тата тачăрах пĕтĕçтерĕ.

Мускав метрополитенĕн иккĕмĕш черетри строительствине туса пĕтернĕ

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ Правительства Комиссийĕн Мускаври Л. М. Каганович ячĕпе тăракан метрополитенăн иккĕмĕш черетри Горький радиусне йышăннă актне çирĕплетнĕ. Пуйăссем кунта 1938 çулти çентябрĕн 11-мĕшĕнчен тытăнса çÿреме пуçлаççĕ.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ 9,6 километрлă тата 6 станцăлă Горький радиусĕн сооруженине лайăх туннине палăртнă. Строительство 509 миллион тенке ларнă—сметăпа пăхнинчен 3,6 процент кайарах.

Горький радиусне тунипе метрополитенăн иккĕмĕш черетри строительствине—14,9 километрлă икĕ ретлĕ çула тата 9 станцăна туса пĕтернĕ.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ метрострой ĕçне ырласа, Мускаври метрополитенăн иккĕмĕш черетри строительствин коллективне тав тунă. (ТАСС).

Триполйери герой-комсомолецсен памятникне тăваççĕ

1919 çулта Триполйере (Киевщинă) кулаксен бандисем комсомолецсен отрядне тискеррĕн вĕлернĕ пулнă. Тăван çĕршыван паттăр ывăлĕсем совет влаçне хÿтлесе вилнĕ вырăнта халь памятник лартаççĕ. Памятник çине 96 герой-комсомолецсен ячĕсене çыраççĕ тата Триполйери трагеди эпизочĕсене ÿкереççĕ. (ТАСС).

Оборонă çурчĕсем тăваççĕ

Ялта массăллă оборонă ĕçĕн центрĕ пулса тăнă оборонă çурчĕсем тунă колхозсен хисепĕ Украинăра кашни кунах ÿсет. Каменец-Подольск облаçĕнчи Волочиск районĕнчи Порохня ялĕнче оборонă çурчĕ çумĕнче пашалпа тĕл пеме вĕрентес тĕлĕшпе 8 кружок ĕçлет, вĕсенче 190 çын вĕренет. Нумай пулмасть колхозникĕсемпе колхозницăсем 37 çын „Ворошиловский стрелок" значокне илме нормăсем панă. (ТАСС).

Шыв пăрки тăваççĕ

Ростов облаçĕнчи Буденновски тата Орловски станицăсенче шыв пăрки тума тытăннă. Çичĕ километр хушши шыв пăрки хурса тухаççĕ. Колхозлă станицăсем кăçалах çĕнĕ шыв пăркинчен таса та тăрă шыв илмеле.

Большевикла парти историне тарăнăн вĕренер

Çентябрĕн 9—10-мĕшĕсенче столицăри предприятисенче цехсенче ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиссийĕ редакциленĕ Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Парти Историйĕн Кĕске курсĕн пĕррĕмĕш сыпăкне вуланă.

Ленински чукунçулĕн вакун участокĕнче Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Парти Историйĕн Кĕске курсĕн пĕррĕмĕш сыпăкне вуласа панине 400 рабочи ытла итленĕ. Рабочисем парти комитетĕнчен парти историне йалана вĕренсе пырас ĕçе анлăрах организацилеме ыйтнă.

Мускаври пурçăн тĕртекен „Красная роза" хапрăкра çентябрĕн 9-мĕшĕнче цехсенче пулнă калаçусене коммунистсемпе комсомолецсем çеç мар, партире тăман рабочисем те нумай пынă. Хатĕрлекен цехри работница Жарких йулташ çапла каланă:

— Епер питĕ лайăх учебник илтĕмĕр, ăна ăнланмалла тата уçă формăпа çеç мар, ăна тата теори йенчен тарăн содержанипе çырнă. Коммунистсене, комсомолецсене, партире тăман ĕçсыннисене вăл большевизма вĕренме, большевикла сыхлăха ÿстерме пулăшĕ. Вĕренĕве йĕркелĕ çÿрер, пирĕн большевикла парти историне тарăнăн вĕренер.

Нумай çынсем хушшинчи калаçусем Мускаври „Электросвет" савăтра та пулса иртнĕ. Савăтра партком парти историне вĕренме татах икĕ çĕнĕ кружок организацилеме йышăннă. (ТАСС).

Çесси ĕçĕсене вĕренеççĕ

** Пÿртлĕри „Ударный" колхозра (Турхан р.) ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕнче йышăннă саккунсене вĕренесси саралсах пырать. Çентябрĕн 5-мĕшĕнче ялти колхозниксемпе единоличниксен пĕрлехи пухăвĕ пулса иртрĕ. Кунта „Уйрăм хуçалăхсен лашисем çине государство налогĕ хурасси çинчен" йышăннă саккуна сÿтсе явреç. Колхозниксем Çессире йышăннă саккунсене тулли кăмăлпа ырлаççĕ. Кунпа пĕрлех государство умĕнчи обязательствисене вăхăтра пурнăçласа пыма пулаççĕ.

Çесси решенисене ăнлантарса парас тĕлĕшпе агитаторсем те ĕçлеççĕ.

И. Лапшин.

◆◆ Çесси решенисене вĕреннĕ май колхозниксем государство умĕнчи обязательствăсене лайăх тултарса пыма тытăнчĕç. Елĕк ялсоветне кĕрекен (Елĕк р.) ялсенче агитаторсем тата вулав çуртĕн пуçлăхĕ Т. Волков йулташ ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕнче йышăннă саккунсем çинчен ăнлантарса пачĕç.

Уйрăмах агитаторсем государство бюджечĕ çинчен тĕплĕн чарăнса тăнă. Çакăн хыççăн ял хушшинче укçа тенкĕ пухасси вăйлаланчĕ. Ялсоветпе илсен кĕске хушăрах ялхуçалăх налогĕпе займ укçи 4500 тенкĕ ытла пухнă.

Н. Романов.
Д. Матвейев.

Халăх переписне хатĕрленетпĕр

**Шупашкар районне переписĕ ирттерес тĕлĕшпе 3 отделенине уйăрнă. Кашни отделени çумне ответлă çынсем уйăрса хунă. Отделенисене 4—6 участокăн пайланă, участокăсенче ĕçлемешкĕн инструкторсем хатĕрлесе çитерне.

Перепис вăхăтĕнче 69 счотчик ĕçлемеле, халĕ 90 счотчик хатĕрленĕ.

Пульницăсенче, акушер пункчĕсенче переписĕ ирттерме 3 участок тунă. Участоксем валли кадрсем çителĕклĕ хатĕрлесе çитерне.

Переписĕ хатĕрленнĕ çĕрте çитменлĕхсем те пур-ха. 1939 çулта пулса иртекен Пĕтĕм Союзри халăх переписĕ çинчен агитацилесси начар пырать. Уйрăм агитаторсем халăх переписĕ пирки халăх хушшинче ăнлантарас ĕçе пуçарса пымаççĕ. Счотчиксене, инструкторсене куллен кирлĕ япаласемпе пулăшса тăмашкăн уйрăм çынсем уйăрса хуман.

Л. Семенов.

** Аманик ялсовечĕ (Куславкка районĕ) çитес çул пуçламĕшĕнче пулакан халăх переписне хатĕрленес пирки нимĕн те тумасть. ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Пĕтĕм Союзри халăх переписне ирттересси çинчен" постановлени йышăннăранпа колхозниксем хушшинче калаçу пĕр хут çеç ирттернĕ. Переписре ĕçлеме комисси тата счотчиксем уйăрса хуман.

Çавăн пекех комсомол организаци те переписĕ хатĕрленессипе нимĕн те тумасть. Комсомолецсем çитес перепис çинчен ăнлантарма тытăнман.

В. Ванюшков.

Хĕрлĕ Çар призывĕ

Çитĕнÿсемпе кĕтсе илетпĕр

ШĂХАСАН. Вăрман Йенĕш ялсоветĕнчи призывниксем алла повесткăсем илнĕ, призыва çентябрĕн 16-мĕшĕнче кĕмеле. Çак куна епĕр ĕçри çитĕнÿсемпе кĕтсе илетпĕр. Садовников, Васильев, Скворцов, Тиханов, Смирнов призывниксем государство умĕнчи пур обязательствисене те пурнăçлареç.

Манăн та кăçал призыва кĕмелле. Халĕ ялсовет председателĕнче ĕçлетĕп. Çакна май епĕ ялсоветне пур йенĕпе те малта кăларма тăрăшатăп. Виççĕмĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана 97 процент, государствăна аш-какай тата сĕт-çу тараçмали плана 91 процент тултартăмăр.

Пирĕн ялсоветран сывлăхлă, хут лайăх пĕлекен çамрăксем призыва кĕреççĕ.

Н. Михайлов.

Аслă шултан тухнисем Хĕрлĕ Çар ретне

Шупашкар хули кăçал Хĕрлĕ Çар ретне вăтам тата аслă шкултан вĕренсе тухнă çамрăксене те чылай парать. Хĕрлĕ Çара инженерсем, педагогсем, тухтăрсем, юристсем кайаççĕ. Çентябрĕн 8-мĕшĕпе 9-мĕшĕсенче икĕ кун хушшинче аслă шкулсенчен вĕренсе тухнисене 43 çынна Хĕрлĕ Çара илнĕ.

Ака призывник Лебедев Йакăв. Вăл 1915 çулта Нурăсра (Вăрнар районĕ) чухăн çемйере çуралнă. Лебедев ашшĕ вилнине астумасть те Амăшĕ унăн 12 çулхи ывăлне хăварса вăхăтсăр вилмĕпе вилнĕ. Лебедев пилĕк çул хушши тăлăх ачасен çуртĕнче пулнă. Ăна совет влаçĕ вĕрентнĕ. Вăл Хусанти Юридически шкулран вĕренсе тухнă. Лебедев çентябрĕн 8-мĕшĕнче призыва кĕчĕ. Хăй вăл унчен Чăваш АССР Юстици Халăх Комиссариатĕнче защитниксен коллегийĕнче ĕçленĕ. Ăна призыв комиссийĕ Хĕрлĕ Çара илчĕ.

Çакăн пекех Бунин Владимира та илсе кăтартма пулать. Вăл 1913 çулта Лепсерте (Çĕрпÿ р.) çуралнă. Ашшĕ-амăшĕ чухăн çынсем пулнă. Бунин амăшĕнчен 3 çулта чухне тăлăха тăрса йулнă Çакăн хыççăн çамрăк Володяна пичĕшĕ Сергей пăхса çитĕнтерме хăй патне илнĕ. Бунин халĕ ачасен чирĕсемпе кĕрешекен тухтăр. 1930 çултанпа комсомолта тăрать. Çентябрĕн 8-мĕшĕнче вăл призыв комиссийĕнче пулчĕ. Ăна призыв комиссийĕ Хĕрлĕ Çара илчĕ.

В. Цыпленков.

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Чехословакири лару-тăру

Çентябрĕн 9-мĕшĕнче Чехословаки правительстви пуçлăхĕ Годжа генлейнăвецсен депутачĕсене йышăннă. Вĕсене вăл Моравска Острава хулинчи „инцидента" тĕрĕслени результачĕсем çинчен каласа панă. Çака палăрнă: полицейскисем Май депутата хĕненĕ тенине генлейнăвецсем пуçран шухăшласа кăларнă. Анчах, тĕрĕслесен çакна тупса палăртнă: полици хăшпĕр сотрудникĕсем арĕслене генлейнăвецсене „саккунсăр" тыткаланă. Çавăн пирки, Моравска Острава хулинчи полици тытăмĕн тăвалла сотрудникне тĕлĕшпе ĕçе суда памала тунă.

Тĕрĕслени результачĕсемпе депутатсем килĕшÿлле пулнă, вĕсем: çапла вара, калаçусене сирсе ямалли сăлтав пĕтсе ларнă ĕнтĕ,—тесе пĕлтернĕ.

Генлейнăвецсем Чехословаки правительствипе калаçассине малалла тăсма шутлани халĕ паллă мар-ха.

Чехословаки хаçачĕсем Германи фашисĕсем çĕнĕрен пысăк провокаци тума хатĕрлени çинчен пĕлтерекен хыпарсене пичетлесе кăларнă, вăл провокаци Чехословаки çине тапăнас сăлтав пулса тăмалла мĕн. Генлейн çине „тапăнма" шутланине инсценировка туса кăтартма хăтланаççĕ, çак провокаципе Чехословаки çине хĕсĕпашалпа пырса кĕрес тĕлĕшпе усă курмалла. (ТАСС).

Республикăлла Испанире

ÿКЕРЧĔК СИНЧЕ: Республика сывлăш флочĕн çамрăк лётчикĕсем. (Союзфото).

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Çентябрĕн 8-мĕшĕнче хĕвелтухăç фронтĕнче пăлхавçăсем Леваль де Торре ятлă сăртлă массив çине тăвата вăйлă атака тунă. Анчах республиканецсен чаçĕсем пăлхавçăсем çине персе тăнипе пăлхавçăсем кайала чакнă Çакăн хыççăн пăлхавçăсем кавалерипе усă курса наступлени пуçлама хăтланнă, анчах республиканецсем фашисла кавалерин малти отрядне çĕмĕрсе тăкнă, кавалерин ытти чаçĕ тарса пĕтнĕ.

Çентябрĕн 9-мĕшĕнче фашиссен вуна самолечĕ Валенси хули çине бомбăсем пăрахнă. (ТАСС).

Провокаци тума чарăнмаççĕ

Çентябрĕн 9-мĕшĕнче Йаблонц хулинче (Судет облаçĕ) коммунистсемпе чех социал-демократĕсем пухнипе массăллă пуху пулмалла пулнă Пуху пуçланиччен пĕр çехет маларах 400 генлейнăвец зала пырса кĕнĕ те, пуху тума чарни çинчен пĕлтернĕ. Полици вĕсене залран хăваласа кăларса яма тытăнсан, генлейнăвецсен бандисĕсем хирĕç тăма пуçланă, вĕсем çав çурта çĕмĕрсе тăкнă. Çавăн йевĕрлĕ „инцидент" Подмокли хулинче те пулса иртнĕ. (ТАСС).

Генлейнăвецсен провокацийĕсене хирĕç протестлеççĕ

ПРАГА, çентябрĕн 9-мĕш. (ТАСС). Чехословакири мĕн пур демократилĕ организацисем тата хаçатсем правительствăран вăрçă чĕртекенсен провокацийĕсене пĕтерсе лартма ыйтаççĕ.

Енерхи кун çеç президент Бенеш патне Чехири, Моравири тата Словакири рабочисенчен тата демократилĕ организацисенчен телеграммăсем, резолюцисем тата çырусем икĕ пин ытла килнĕ.

Президент патне йанă чĕнсе каланисем çине нумай чухне пур партисем тата хăйсен лидерĕсен капитуляцилла политикипе килĕшмен аграрлă партин вырăнсенчи организацисем те алă пусаççĕ.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Центрти Китайра Йанцзы юханшывĕн кăнтăр çыранĕ патĕнче Китай çарĕсем Жуйчанран кăнтăр йенче японецсен атакисене сирсех пыраççĕ. Китай çарĕсем калама çук пысăк хăйулăхпа вăрçнине палăртаççĕ. Кĕçĕн лейтенант Лю Гуй-шан 7 боецран тăракан хăйĕн отделенийĕпе çентябрĕн 8-мĕшĕнче Жуйчанран кăнтăр йенче оборонăра тăнă. Çапăçура унăн виçĕ боецне вĕлернĕ тата виççĕшне аманттнă пулнă. Анчах та çĕнĕ подкрепленисем пыриччен вĕсем хăйсен позицине çирĕппĕн тытса тăнă.

Наньчан районĕнче (Синьцзы) халăх çапăçусем пулса пыраççĕ. Китайецсем, вĕсем çине сывлăшран бомбăсем пăрахнине тата японецсен çар карапĕсем çинчен пенине пăхмасăрах, хăйсен позицисене сыхласа тăраççĕ.

Йанцзы шывĕн çурçĕр çыранĕ патĕнче Китай çарĕсем çентябрĕн 9-мĕшĕнче контрнаступлени туса пынă.

Çурçĕр Китайра Шаньси провинцин кăнтăр пайĕнче Китай çарĕн регулярлă çарĕсен батальонĕ, партизансен отрячĕсем пулăшса пынипе, японецсене Фынлинлуран (Хуанхе шывĕн çурçĕр çыранĕнче, Тунгуаньпе тĕлме-тĕл) хĕссе кăларнă. (ТАСС).

Парти пурнӑҫӗ

Партине ҫӗнӗ членсем илесси

1936 ҫулхи нойабӗр уйӑхӗнчен пуҫласа 1938 ҫулхи йанварӗн 1-мӗшчен Тутаркас парторганизацинче парти кандидатне пурӗ те 1 ҫын анчах илнӗ, 2 кандидата члена куҫарнӑ. Вӗсене те парти документӗсене вӑхӑтра йӗркелесе паман. Ҫаван пек, парти кандидатне илнӗ Шемешкейӗв йулташӑн ӗҫӗсене Хӗрлӗ Ҫара кайсан тин йӗркелесе пӗтернӗ. Кандидатран члена куҫарнӑ Йефремӑвпа Андрейӗв йулташсене партбилетсем пӗр ҫулталӑкран анчах панӑ.

Партине илес ӗҫре ытти чӑрмавсем те пулса пычӗҫ. Хӑшпӗр коммунистсем партине кӗме шутлакансене рекомендаци памасӑр тӑнисем пулнӑ.

ПСК(б)П Обкомӗн V-мӗш пленумӗн решенисене пурнӑҫлас шутпа парти райкомӗ районри парторганизаци пухӑвӗ 2, парторгсемпе вӗсен заместителӗсен канашлӑвӗсем 2 тата пуҫламӑш парторганизацисенче пухусем туса иртерне. Пуҫламӑш парторганизацисене пулӑшмашкӑн райцентрти партактива йалсене йанӑ. Вӗсем, парторганизацисенче ПСК(б)П Тӗпкомӗн йанварти пленум тата Обкомӑн V-мӗш пленум решенисене тӗплен сӳтсе йавса, партинче тӑманнисен хушшинчи политикӑпа массӑлӑ ӗҫе вӑйлатма пулӑшрӗҫ.

Халӗ партине илес ӗҫ вӑйлансах пырать. Кӑҫалхи ҫул 37 ҫынна парти кандидатне илнӗ, 23 ҫынна кандидатран члена куҫарнӑ.

Парти райкомӗ ҫумӗнчи пуҫламӑш парторганизаци 5 ҫынна парти кандидатне илнӗ, 5 ҫынна кандидатран члена куҫарнӑ.

Райӗҫтӑвком ҫумӗнчи пуҫламӑш парторганизаци 10 ҫынна кандидата илнӗ, 6 ҫынна кандидатран члена куҫарнӑ.

Илйинкари организаци 5 ҫынна кандидата илнӗ, 2 ҫынна кандидатран члена куҫарнӑ.

Парторганизаци йышӗ ытларах служащисен шучӗпе ӳссе пырать. Парти кандидатне илнисенчен 20 служащи, 17 колхозник. Кандидатран члена куҫарнисенчен 9 служащи, 10 колхозник. Ку, ӗнтӗ, пуҫламӑш парторганизацисем колхоз производствинчи ударниксене, стахановецсене ҫителӗклӗ пӗлсе пыманнинчен килет. ССРС, союзлӑ тата автономлӑ республикӑсен Верховнӑй Совечӗсен депутачӗсене суйланӑ вӑхӑтра партинче тӑман активӑн хисепӗ нумай ӳсрӗ. Ҫав актив хушшинче партине кӗме йурӑхлӑ ҫынсем сахал мар.

Парти йышне ӳстерес ҫӗрте комсомол пысӑк резерв пулса тӑрать. Тутаркас районӗнче комсомолецсенчен 30 ҫынна анчах парти ретне илнӗ. Райкомол комсомолецсене партине кӗме рекомендацисем парас ӗҫре йанӑшсем те турӗ. Ӗҫрен пӑрӑнса ерех ӗҫсе ҫӳрекен, дисциплинӑна пӑсакан Бычков Аркадине тата „Сатурн" колхозри хулиганлӑ ӗҫсем туса ҫӳрекен Йакӑвлӗв комсомолецсене рекомендаци панӑ. Вӗсене райком партине илмерӗ. Малашне райкомолӑн партине кӗме рекомендаци парас ӗҫ ҫине тӗплӗн пахмала.

Хӗрарӑмсене партине илес, сочувствуйушчисен йышне ӳстерес ӗҫсем начар пыраҫҫӗ-ха. Ҫак ӗҫсене райкомӑн вӑйлатмала.

Районри парторганизаци умӗнче партине ҫӗнӗрен илнӗ йулташсене политикӑлӑ воспитани парас тӗлӗшпе пысӑк задача тӑрать. Парти вӗренӗвӗнче ПСК(б)П историне ҫӗнӗ учебник тӑрӑх вӗренесси тӗп вырӑнта тӑмала. Ӑна кашни парти членӗн, кандидатӑн, сочувствуйушчин, комсомолецӑн тӗплӗн вӗренмеле. Парти историне вӗренес ӗҫе партире тӑман актива та пысӑккӑн хутшӑнтармала. Ҫакӑн пек туни вӑл—парти организацисен йышне социалисӑм строительствинче активлӑн кӗрешекен ҫынсен шучӗпе ӳстерсе пыма пулӑшать.

Анисимӑв.
ПСК(б)П Тутаркас райкомӗн секретарӗ.

Районри парторганизаци пухӑвӗ

ШӐХАСАН, ҫенћаберӗн 11-мӗш. (Хамӑр корр. телефон тӑрӑх). Ӗнер кунта коммунистсен районри пухӑвӗ пулса иртрӗ. Тӑшмансен сӑтӑрлӑ ӗҫӗсен йулашкисене пӗтерес ӗҫ районра мӗнле пыни ҫинчен райком секретарӗ Никитин йулташ тунӑ доклад тӑрӑх, прение 31 ҫын тухса каларӗҫ. Докладчик та, прение тухса калакансем те, партин йертсе пыракан органӗсен суйлавне иртернӗрен вара тӑшмансен сӑтӑрла ӗҫсен йулашкисене пӗтерес тӗлӗшпе хӑшпӗр ӗҫсем тунине палӑртнипе пӗрлех, халӑх хуҫалӑхӗпе култура строительствин чылай участокӗсенче сӑтӑрла ӗҫсен йулашкисене пӗтересси ҫаплах начар пыни ҫине кӑтартрӗҫ.

Пусуҫаврӑнӑшне пӑтраштарса пӗтернисем пайанхи кунччене нумай колхозсенче палӑраҫҫӗ. Суртлӑ вӑрлӑхсене ҫапнӑ чухне, итем ҫинче, суртсӑр вӑрлӑхсемпе хутӑштарса йараҫҫӗ. Райҫӗрӗҫ пайӗ выљӑх апачӗшӗн начар кӗрешет, Унти коммунистсем (Мухин, Йакӑвлӗв) аппаратра дисциплинӑна йапӑхтарнӑ. Вӗсем колхозсене начар йертсе пыраҫҫӗ.

Кӑҫалхи уйхир ӗҫӗсен вӑхӑтӗнче МТС тракторӗсем пин сменӑлӑх ытла простой тунӑ.

Район укҫа-тенкӗ пухас йенӗпе III-мӗш квартал планне пурӗ те 53 процент анчах тултарнӑ.

Государствӑна тырӑ тӑратас плана 65 процент кӑна тултарнӑ. Аш-какай хатӗрлев планне—55,4 процент (ҫулталӑк планӗ), сӗт хатӗрлев планне—59,7 процент кӑна тултарнӑ.

Таварҫаврӑнӑш планне III-мӗш кварталшӑн 55 процент кӑна тултарнӑ. Ҫав вӑхӑтрах райсойуз склачӗсенче тавар 9 пин тенкӗлӗх, Шӑхасан йалповӗн склачӗсенче 5 пин тенкӗлӗх пӑсса пӗтернӗ. Райсойузӑн та, Шӑхасан йалповӗн те складсем ҫук. Таварсене уйрӑм ҫынсен склачӗсенче усраҫҫӗ.

Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗпе Чӑвашсойуз хӑйсен вырӑнӗсенчи организацисене тӑшмансен сӑтӑрла ӗҫӗсен йулашкисене пӗтерес ӗҫре ытла та ҫителӗксӗр пулӑшаҫҫӗ. Районти 26 пуҫламӑш шкултан 4 шкулӗнче анчах программӑсем пур. Вӑтам шкулсенче 8—9 классем валљи программӑсем ҫук. Нимӗҫ тата чӑваш чӗлхисем тӑрӑх ниҫта та нимӗнле программӑ та ҫук.

Ҫакӑнта илсе кӑтартнӑ ҫитменлӗхсем районра тӑшмансен сӑтӑрла ӗҫӗсен йулашкисене пӗтерес ӗҫ ытла начар пыни ҫинчен калаҫҫӗ.

Районри парторганизацинче йулашки вӑхӑтра партилӗ ӗҫсем йусанма пуҫларӗҫ. Уйрӑм пуҫламӑш парторганизацисем хӑйсен ӗҫӗсене чылайах лайӑхлатрӗҫ.

Анчах ҫаксем пурте вӗсем ҫителӗксӗр. Парти организацисен хӑйсен ӗҫӗсене тӗпрен лайӑхлатса йамала.

С. Соколов.

Палӑрнӑ кӑлтӑксем

Канаш районӗнчи шкулсенче вӗренекен ачасен шучӗ иртнӗ ҫултипе танаштарсан нумай ӳсни палӑрать. 1937—38 вӗренӳ ҫулӗнче районри пуҫламӑш, туллимар вӑтам тата вӑтам шкулсенче пӗтӗмпе 4802 ача вӗреннӗ пулсан, кӑҫалхи вӗренӳ ҫулӗнче 5695 ача вӗренет. Кусемсӗр пуҫне тата финанспа економика техникумӗнче, педучилищӗра, фељдшӗрсен шкулӗнче 1500 ача вӗренет.

Кӑҫал педучилищӑ, фељдшӗрсен шкулӗ валљи ҫӗнӗ ҫуртсем лартнӑ.

Пӗтӗмӗшпе илсен, районри шкулсем ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне аван пуҫӑнчӗҫ. Анчах та ҫакӑн пек ҫитменлӗхсем пур: Вӑтапуҫӗнчи пуҫламӑш шкул ҫуртне халӗ те туса пӗтермен. Йанкӑлчри туллимар вӑтам шкулта ремонт пырать. Районӗпе пурӗ 5 учитӗл ҫитмест. Хулари вӑтам шкулта учитӗл ҫук пирки нимӗҫ чӗлхипе пӗр урок та пулман.

Районта шкулсем валљи вутӑ хатӗрлесе турттарасси те вӑраха йулса пырать. Шкулсем валљи тата 1082 кубла метр вутӑ хатӗрлемеле. Татмӑшри туллимар вӑтам шкулӑн вутӑ пачах та ҫук. Кармаминчи туллимар вӑтам шкул 30 кубла метр, Вырӑскас Пикшихри туллимар вӑтам шкул 20 кубла метр ҫеҫ хатӗрленӗ.

Иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнче чылай шкулсенче ачасене вӗрентес ӗҫ йапӑх пулнӑ. Районӗпе малалли классене куҫайманнисем 400 ача, кӗркуннехи тӗрӗслеве йулнисем 457 ача. Уйрӑмах вырӑс чӗлхине вӗрентес ӗҫ йапӑх тӑнӑ. Кӗркуннехи тӗрӗслеве йулнисенчен 66 проценчӗ вырӑс чӗлхипе начар пӗлнипе техникума, училищӑна вӗренме кӗрейменнисем те нумай пулчӗҫ.

Учитӗлсем хӑйсен пӗлӗвне ӳстерессипе те ҫителӗклӗ ӗҫлеҫҫӗ теме ҫук. Пӗлӳ тӗлӗшӗнчен кайарах тӑракан учитӗлсене заочнӑ вӗренес ӗҫе йавӑҫтарнӑ. Анчах хӑшпӗр учитӗлсем харпӑрхӑй пӗлӗвне ӳстерессишӗн ҫителӗклӗ тӑрӑшмаҫҫӗ-ха.

Ив. Малов.

Шкул ҫулне ҫитмен ачасемпе ӗҫлесси

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ йышӑннӑ постановлени тӑрӑх, кӑҫал пирӗн республикӑри ача учрежденисене мӗн пурӗ 51.500 ача,—ку шутран 8500 ачана стационарнӑйсене, 43 пин ачана колхозсенчи йаслӗсемпе ача площадкисене йавӑҫтармала пулнӑ.

Шкул ҫулне ҫитмен ачасемпе ӗҫлеме Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗн 69 ҫын вӗрентсе хатӗрлемеле пулнӑ. Ку ӗҫе Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗ пурнӑҫа кӗртмерӗ.

Кашни районрах шкул ҫулне ҫитмен учрежденисемпе ӗҫлекен инспекторсем пур, анчах вӑл инспекторсене Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗ, тата ҫутӗҫ пайӗсем пулӑшса пымаҫҫӗ. Ҫавна пула вӗсем колхозсемпе договӑрсем туса йаслӗсем уҫас ӗҫе вӑраха йачӗҫ.

Шкул ҫулне ҫитмен ачасене лайӑх условисенче пӑхса усрасси пысӑкран та пысӑк ӗҫ пулса тӑрать. Ку пӗр йенчен, ача-пӑча сывлӑхне упрама, тепӗр йенчен—ачасем алхаснипе тӗрлӗрен шар курассинчен сыхланма пулӑшать.

Ирӗкре ҫӳрекен ачасем алхаснинчен час-часах питех те пысӑк инкек сиксе тухать. Акӑ тӗслӗхрен илсен: кӑҫалхи августӑн 18-мӗшӗнче Мемеккассинче (Тутаркас р.) ачасем вут-кӑварпа выљанинчен пушар тухса 19 хуҫалӑх ҫунса кайнӑ. Пушарпа колхоз ампарӗнчи 3 пин пӑт тырӑ ҫуннӑ. Ку ҫеҫ те мар-ха. Ҫӗнӗ Тӑрмашра (Тавай р.) пӗр виҫӗ ҫулхи ачана киле пӗчченех пӑрахса хӑварнӑ та, вӑл ҫӑла кайса вилнӗ.

Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗн шкул ҫулне ҫитмен ачасемпе ӗҫлеме кадр хатӗрлесси ҫине тивӗҫлипе ҫаврӑнса пӑхмала. Шкул ҫулне ҫитмен ача учрежденисене ӳстермеле.

Николайӗв.
Ача-пӑча учреждени работникӗсен сойузӗн облӑҫри Комитечӗн председателӗ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Парашутисткӑ—орденоносецӑ Санд Мамедӑвӑ (сулахайра) тата орденоносецӑ Т. Л. Сотникӑвӑ йулташсем. Вӗсем Жуковский йачӗпе тӑракан Сывлӑш-ҫар Академине вӗренме кӗме испытани тытнӑ.

Б. Федосийӗв фото-ӳкерчӗкӗ (Сойузфото).

Ҫӗнӗ шкула хӑвӑртрах туса пӗтермеле

Аслӑ Каҫалари (Патӑрйел р.) ҫӗнӗ шкула вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑ тӗле туса пӗтермелеччӗ. Ҫутӗҫ пайӗ (пуҫлӑхӗ Корољков йулташ) шкул строительствине йапӑх йертсе пырать.

Каҫал шкулӗнче классем ҫителӗклӗ мар. Ҫапах та ҫӗнӗ шкул тӑвасси питӗ вӑраххӑн пулса пырать. Строительствӑ планне пайанхи куна та 40 процент ҫеҫ пурнӑҫланӑ. Шкул ҫуртне васкавлӑн туса пӗтермеле.

Ф. Тимофейӗв.

Классем ҫитмеҫҫӗ

Тӗрерти (Трак р-нӗ) туллимар вӑтам шкул вӗренӳ ҫулне хатӗрленмесӗр кӗтсе илчӗ. Ҫавна пула вӗренӳре нумай ҫитменлӗхсем палӑраҫҫӗ. Классем ҫитмеҫҫӗ. Пӗррӗмӗш класра 45 ача вӗренмеле пулсан, пайанхи кун 20 ача ҫеҫ вӗренеҫҫӗ, пӳлӗм ҫитменнипе ыттисене вӗренме пӑрахтарнӑ. Шкул вӗренӳ ҫулӗ пуҫланиччен пур классем валљи те пӳлӗмсем ҫителӗклӗ тутарма пултарнӑ, районри ҫутӗҫ пайӗ шкула 7 пин тенкӗ укҫа панӑ.

1, 2, 3 тата 4-мӗш классенче партӑсем ҫитмеҫҫӗ, пуррисем те йусавлӑ мар, ҫитменнине тата 1—2-мӗш классенче вӗренекенсене ларма ҫӳллӗ.

Н. Йемељйанӑв.

Учитӗлсен политкружокӗсем

Кӑҫалхи вӗренӳ ҫулӗнче Шӑхасан районӗнчи шкулсенче пурӗ 235 учитӗл ӗҫлеҫҫӗ. Паллах, шкул ачисене ҫирӗп пӗлӳ парас тесен, учитӗлсен хӑйсен политикӑлӑ пӗлӳлӗхне куллен хӑпартса пымала. Унсӑрӑн ҫамрӑк ачасене ҫирӗп пӗлӳ пама ҫук.

Иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнче учитӗлсем хушшинче политкружоксем районӗпе те 13 ҫеҫ пулнӑ, кӑҫал 17 кружок организациленӗ. Вӗсенчен 11-шӗ парти историне вӗренмели кружоксем, 6-шӗ ССР Сойузӗн историне вӗренмели кружоксем.

Вӑл кружоксене йертсе пырас ӗҫре ПСК(б)П Шӑхасан райкомӗн парткабинечӗ тӑрӑшса ӗҫлет. Парткабинет пуҫлӑхӗ Михайлӑв йулташ кружоксен руководителӗсене пухса, икӗ хут семинар туса ирттерчӗ.

Учитӗлсен политкружокӗсенче зањатисем уйӑхра виҫӗ хут—7, 14, 26-мӗш числасенче пулса иртеҫҫӗ.

Дм. Шаљкас.

3.500 тенкӗлӗх хӑйар сутнӑ

ҪӖРПӲ. Кӑҫал Чурачӑк йалсоветӗнчи „Вучах" колхоз хӑйар сутса пысӑк тупӑш илчӗ. Колхозниксене ӗҫкунӗсем тӑрӑх салатса панӑ хыҫҫӑн йулнӑ хӑйара 3.500 тенкӗлӗх сутнӑ.

Н. Мефодийӗв.

Ӗҫсем лайӑхланаҫҫӗ, анчах ҫителӗксӗр

ЙЕПРЕҪ. Райӗҫтӑвком ҫумӗнчи пуҫламӑш парторганизаци иртнӗ ҫулсенче начар ӗҫленӗ. Пӗтӗм ӗҫ плансӑр пулса пынӑ.

Парторганизацин апрел уйӑхӗнче пулса иртнӗ отчотпа суйлав пухӑвӗ ӗҫри ҫитменлӗхсене хытӑ тишкерсе, вӗсене пӗтерме татӑклӑ решени йышӑнса хӑварнӑ.

Отчотпа суйлав пухӑвӗнче парторга К. Маргинов йулташа суйланӑ. Маргинов йулташ отчотпа суйлав пухӑвӗ иртнӗренпе пуҫламӑш парторганизаци ӗҫне чылай лайӑхлатрӗ.

Коммунистсем хушшинче партилӗ-массӑлӑ ӗҫ те аванланса пырать. Пуҫламӑш парторганизаци ҫумӗнче 14 ҫынран агитколлектив организациленӗ. Вӗсенчен: Лебедӗв, Мигурин, Йакимӑв, Степанӑв агитаторсем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ.

Парти ретне ҫӗнӗ членсем илес ӗҫ те аванланнӑ. Отчотпа суйлав пухӑвӗччен пуҫламӑш организацинче парти членӗсем 5 ҫын, кандидатсем 3 пулнӑ пулсан, халӗ парти членӗсем 11 ҫын, кандидатсем 12, сочувствуйушчи 1 ҫын.

Пуҫламӑш парторганизаци ӗҫӗнчи пысӑк ҫитменлӗхсенчен пӗри вӑл—пухусене палӑртнӑ кунсенче иртерменни пулать. Ҫенћаберӗн 2-мӗшӗнче иртерме палӑртнӑ пуху пулман. Ҫак уйӑхшӑн ӗҫ планӗ те ҫук. Агитаторсен семинарӗсем сайра хутра ҫеҫ иртеҫҫӗ. Парти ретне ҫӗнӗ членсем илесси те ҫителӗксӗр. ССРС, РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавӗсем вӑхӑтӗнче палӑрнӑ ҫӗнӗ кадрсенчен, выдвижени йӗркипе, райӗҫтӑвкомра ответлӑ вырӑнсенче ӗҫлеме 19 ҫын илнӗ. Ҫак кадрсене пуҫламӑш парторганизаци начар вӗрентет-ха. Вӗсемпе уйрӑм канашлусем иртермеҫҫӗ.

Ф. Захарӑв.

Бољшевикла идейлӑхпа организацилӗх

Пӗтӗм Сойузри Коммунистсен (бољшевиксен) Парти Историйӗн Кӗске курсӗ,—ӑна ПСК(б)П Тӗпкомӗ ырланӑ,—бољшевисӑм историн ыйтӑвӗсене теорилӗ пысӑк ҫӳлӗше ҫӗклет, коммунистсене пирӗн мухтавлӑ партин пӗтӗм историнчи опытпа пуйанлатать.

Ҫак ӑслӑлӑхлӑ ӗҫӗн пайан „Правда" хаҫатра пичетленсе тухакан иккӗмӗш сыпӑкӗ Российӑри Социал Демократла рабочи Партине тунӑ тата парти ӑшӗнче бољшевиксемпе меньшевиксен фракцийӗ пуҫланса кайнӑ тапхӑр ҫинчен каласа парать. Вӑл тапхӑрта сывхарса килекен 1905 ҫулти револјуци умӗн рабочи класӑн револјуцилӗ йухӑма йертсе пыма пултаракан пӗрлӗхлӗ, ҫапӑҫулӑ, пӗр центртан йертсе пыракан партине тӑвас тӗлӗшпе Ленин калама ҫук пысӑк йӑвӑрлӑхсене сире-сире йамала пулнӑ.

Иккӗмӗш сыпӑк марксисла партин тумалли Ленин хатӗрленӗ гениллӗ план ҫинчен тата Ленин оппортунистсемпе („економистсемпе", меньшевиксемпе) йепле ҫивӗччӗн кӗрешсе, вӑл кӗрешӳрен ҫӗнтерсе тухни ҫинчен каласа парать, ҫав оппортунистсем малтан рабочи класӑн пӗр центра пӑхӑнса тӑракан пӗрлӗхлӗ партине тума чӑрмантарма тӑрӑшнӑ, унтан вара, партине туса хунӑ хыҫҫӑн, хӑйсен расколљникле ӗҫӗсемпе марксисла ҫамрӑк партине ишӗлтерме тӑрӑшнӑ. Буржуазине тата унӑн тарҫисене хирӗҫ—тӗрлӗ тӗслӗ оппортунистсене хирӗҫ рабочи класӑн револјуцилӗ вӑйӗсене пӗтӗҫтерес тата организацилес йенӗпе Ленин туса иртернӗ гигантла ӗҫӗн картини вулакансем умӗнче сарӑлса пырать.

Рабочи класӑн пӗр центра пӑхӑнса тӑракан пӗрлӗхлӗ парти тӑвас пулсан, царисӑма ҫӗклесе ҫапма, унтан вара влаҫа ҫӗнсе илме пролетариата йертсе пыма пултаракан партине тӑвас пулсан, чи малтанах рабочи класӑн тӗп интересӗсене сутакан тӑшмансене—вӑл вӑхӑтра хӑйсене „економистсем" тесе калакан йатпа пурӑннӑ сутӑнчӑксене ҫӗмӗрсе тӑкма кирлӗ пулнӑ. „Економистсем" царисӑма тата капиталисӑма хирӗҫ пыракан политикӑлӑ кӗрешӳ ҫулӗ ҫинчен рабочи класа парса йама тӑрӑшнӑ. „Економистсем" рабочи класӑн тӗп интересӗсене сутакансем пулнӑ, мӗншӗн тесен вӗсем рабочи класа капиталисӑмран ҫӑлса кӑларакан социаллӑ револјуци вырӑнне „социаллӑ реформӑсемшӗн" тӑрӑшнӑ, капиталисӑма тата мӗн пур капиталисла сысналӑха сыхласа хӑварма тӑрӑшнӑ.

„Економистсене" ҫӗмӗрсе тӑксан ҫеҫ, оппортунисӑм идеологине, стихийнӑҫ умӗнче пуҫ тайтаракан теорине, рабочи йухӑма хӳрере пыртаракан, пурте хӑй тӗллӗнех пулса пырӗ тесе калакан теорине ҫӗмӗрсе тӑксан ҫеҫ рабочи йухӑмне социалисӑмпа пӗрлештерессине пурнӑҫа кӗртме май пулнӑ.

Ленин хӑйӗн „Что делать?" йатлӑ вилӗмсӗр произведенинче вӑйлӑн паларӑтса панӑ теорилӗ положенисем бољшевикла партин идеологи никӗсне хывнӑчӗҫ. Ҫакӑн пек идейлӑ пуйанлӑха вӗренсе, ленинла „Искра" партине тумалли ленинла планшӑн, партин вӑйӗсене пухассишӗн, партин II-мӗш сйесӗшӗн, револјуцилӗ социал-демократишӗн, „економистсене" хирӗҫ, мӗн пур тӗрлӗрен оппортунистсене хирӗҫ вилӗ кампани сарса йанӑ.

Российӑри рабочи класӑн чи лайӑх вӑйӗсене „Искра" тавра пухса, Ленин револјуцилӗ марксисӑмӑн йалавне ҫӳле ҫӗкленӗ.

„Економистсене" ҫӗмӗрсе тӑкнӑ хыҫҫӑн, Ленин меньшевиксене те йӑлтах тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ, ҫав меньшевиксем, тӗрӗссипе илсен, „економистсен" ҫулнех тытса пынӑ. Партине организацилемелли меньшевикла плана „партилӗх идейине пӗчӗклетсе хӑварма, парти кадрӗсенӗ пӗтерсе хума, пролетариата хӑйӗн партийӗсӗр тӑратса хӑварма тата рабочи класа „либералсен ҫӑварне пӑрахса пама.." (Сталин) тунӑ. Ленин хӑйӗн револјуцилӗ тимлӗхӗпе гениллӗ ӑспуҫӗн пӗтӗм вӑйӗпе меньшевиксем ҫине ытӑннӑ. Ҫак кӗрешӳ партин II-мӗш сйесӗнче парти уставӗн пӗррӗмӗш параграфне сӳтсе йавнӑ чухне уҫҫӑн палӑрнӑ.

Ленин ҫапла вӗрентнӗ: организаци пролетариатӑн вӑйне вунӑ хут вӑйлатать, парти, рабочи класӑн малта пыракан ӑнланулӑ отрйачӗ пулнӑ чи малтанах хӑйӗн организацилӗхӗне, тимӗр пек ҫирӗп дисциплинипе, партин кашни членӗ револјуцилӗ кӗрешӗве активлӑн хутшӑнса ӗҫленипе вӑйлӑ.

„Ҫак авангардӑн вӑйӗ,—тенӗ Ленин,—хӑйӗн хисепӗнчен вунӑ хут, ҫӗр хут тата ытларах та пысӑк..

Малта пыракан отрйадӑн ӑнланулӑхӗ вӑл организацилеме пӗлнинче палӑрать те ӗнтӗ. Организацилесен вӑл пӗрлӗхлӗ ирӗк кӑмӑл илет, малта пыракан пинсен, ҫӗршер пинсен, мӗлйунсен ҫав пӗрлӗхлӗ ирӗк кӑмӑлӗ класӑн ирӗк кӑмӑлӗ пулса тӑрать".

Меньшевиксем вара партине организаци йенчен пакланса пӗтесси патне, кружковщинӑ патне, кустарничествӑ патне сӗтӗрнӗ.

1904 ҫулти май уйӑхӗнче пичетленсе тухнӑ хӑйӗн „Шаг вперед, два шага назад" кӗнекинче Ленин меньшевиксен сутӑнчӑклӑ ӗмӗчӗсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларать. Ҫав кӗнекере Ленин партилӗхе кружковщинӑран тата партине дезорганизаторсенчен сыхласа хӑварнӑ, меньшевикла оппортунисӑма ҫӗмӗрсе тӑкнӑ тата бољшевикла партин организацилӗ никӗсӗсене хывнӑ. Ҫав произведенире Ленин, марксисӑм историнче чи пуҫласа, парти ҫинчен вӗрентнине туса хатӗрленӗ, вӑл парти пролетариатӑн йертсе пыракан организацийӗ, пролетариат аллинче чи кирлӗ хӗҫпӑшал пулса тӑрать, вӑл хӗҫпӑшалсӑр пролетариат диктатуришӗн пыракан кӗрешӳре ҫӗнтерме май ҫук.

ПСК(б)П Историйӗн Кӗске курсӗнче бољшевикла партин организацилӗ никӗсӗсем ҫинчен каласа панӑ, вӑл никӗссене Ленин туса хатӗрленӗ.

Бољшевикла партишӗн дисциплинӑ мӗнле вырӑн йышӑнса тӑнине Ленин калама ҫук вӑйлӑн паллӑ тунӑ. Ирӗк-кӑмӑлӑн пӗрлӗхӗ, ӗҫсен пӗрлӗхӗ, дисциплинӑ пӗрлӗхӗ—акӑ мӗскер ӗнтӗ партине рабочи класӑн организацилӗ отрйачӗ тӑвать.

„... Партилӗ дисциплинӑна йӑвӑр тесе шутлакан тата парти организацине кӗме хӑракан членсем,—тесе калавӑ ПСК(б)П Историйӗн Кӗске курсӗнче,—партине кирлӗ мар. Рабочисем парти членӗ пулса тӑрас тесе шутлаҫҫӗ пулсан, вӗсем дисциплинӑпа организацинчен хӑрамаҫҫӗ тата вӗсем организацине хавасланса кӗреҫҫӗ. Дисциплинӑпа организацинчен индивидуалисла шухӑшлӑ интеллигентсем хӑраҫҫӗ, вӗсем чӑнах та партине кӗмесӗрех йулаҫҫӗ".

„Парти хӑйӗн практикинче,—тенӗ малала ПСК(б)П Историйӗн Кӗске курсӗнче,—вӑл хӑйӗн речӗсенче пӗрлӗхлӗх сыхласа тӑрас тет пулсан, партин мӗн пур членӗсемшӗн—лидӗрсемшӗн те, рйадовойсемшӗн те пӗрпекех обйазательнӑ шутланакан пӗрлӗхлӗ пролетарилӗ дисциплинӑна пурнӑҫа кӗртсе пыма тивӗҫ. Ҫавӑнпа та партире дисциплинӑна обйазательнӑ мар пӑхӑнса тӑракан „избраннӑйсемпе" дисциплинӑна пӑхӑнса тӑма тивӗҫлӗ „неизбраннӑйсем" ҫине пайлани пулмала мар. Ҫак условисӗр парти тӗрӗс-тӗкел пурнаҫсине тата унӑн речӗсен пӗрлӗхне сыхласа хӑварма май ҫук".

Ленин „Шаг вперед, два шага назад" кӗнекине ҫырнӑранпа нумай ҫулсем иртрӗҫ. Ленин ҫав кӗнекере вӑйлӑн палӑртса панӑ идейӑсем хӑйсен вӑйӗпе витӗмлӗхне пирӗн партишӗн кашни коммунисшӑн пӗтӗмӗшпех сыхласа хӑварнӑ. Ирӗк-кӑмӑл пӗрлӗхне тата мӗн пур коммунистсен ӗҫӗсен пӗрлӗхне тума май паракан партилӗ дисциплинӑна тӗреклетни—социалисӑм строительствинче малашне те ҫитӗнӳсем тумалли кирлӗ услови пулса тӑрать.

Бољшевикла парти ҫуралса тухсан малтанхи кунсенчех Ленин партине массӑсемпе чи ҫывӑх ҫыхӑнса тӑма кирли ҫинчен вӗрентнӗ.

„Парти тепле малта пыракан чи лайӑх отрйад пулсан та,—тесе калавӑ ПСК(б)П Историйӗн Кӗске курсӗнче,—тата вӑл тепле лайӑх организациленнӗ пулсан та, вӑл ҫапах та партире тӑман массӑсемпе ҫыхӑнмасӑр, ҫав ҫыхӑнусене нумайлатса пымасӑр, ҫав ҫыхӑнусене тӗреклетсе пымасӑр пурӑнма тата вӑйланса пыма пултараймасть. Хӑйӗн ӑшне хупӑнса ларнӑ, массӑсенчен уйӑрӑлса кайнӑ тата хӑйӗн класӗпе ҫыхӑну сухатнӑ йе тата вӑл ҫыхӑнӑва вӑйсӑрлатнӑ парти,—массӑ шанӑҫне тата массӑ пулӑшуне сухатма тивӗҫ,—ҫапла вара пурӑнӑҫран пӗтме тивӗҫ. Тулли пурнӑҫпа пурӑнса вӑйланса пырас тесен, партин массӑсемпе ҫыхӑнса тӑрассине вӑйлатса пыма тата хӑйӗн класӗн мӗлйуншар массисем хӑйне шанса тӑмала тума тивӗҫ".

Хӑйӗн „Шаг вперед, два шага назад" ӗҫӗнче Ленин пирӗн партишӗн централисӑм пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине паллӑ тунӑ, вӑл централисӑм—пӗрлӗхлӗ устав, пӗрлӗхлӗ партилӗ дисциплинӑ, парти сйесӗ урлӑ, сйессем хушшинчи тапхӑрта—парти Тӗпкомӗ урлӑ йертсе пыракан пӗрлӗхлӗ орган пулса тӑрать.

„Правда" хаҫатра пичетленсе тухакан ПСК(б)П Историйӗн Кӗске курсӗ ӗҫлемели руководство пулса тӑрать. ПСК(б)П историйӗн пирӗн парти мӗнле ҫуралса тухни ҫинчен, унӑн организацилӗ принципӗсем мӗнле пуҫланса кайни, ӳсни тата тӗрекленни ҫинчен калакан ҫапӑҫулӑ страницисем—партин мӗн пур членӗсене бољшевикла партилӗх шухӑшӗпе, ӑнланулӑ дисциплинӑ, социалисӑм тӑшманӗсем тӗлӗшпе пӗр ҫураҫусӑр та пӗр хӗрхенӳсӗр пулас шухӑшпа вӗрентсе ӳстерме пулӑшаҫҫӗ.

Бољшевикла партин иртнӗ паттӑр пурнӑҫӗн историйӗ тӑрӑх, вӑл мӗн пур тӑшмансемпе кӗрешнин историйӗ тӑрӑх пирӗн парти кадрӗсем вӗренсе пиҫӗхсе пырӗҫ, ӑслӑ, никам ҫӗнтерейми бољшевиксен партин мӗн пур боецӗсем воспитани илеҫ. Пирӗн малашнехи мӗн пур ҫӗнтерӳсене шантаракан—вӑл парти речӗсем идейӑпа хӗҫпӑшалланни, массӑсемпе таччӑн та никам уйӑрайми ҫыхӑнса тӑни пулса тӑрать. Ленинла-сталинла ҫак принципсемпе ӗҫлесе пырса, епӗр тӑшмансене ӑнҫлӑн ҫӗмӗрсе тӑкрӑмӑр тата ҫӗмӗрсе пыратпӑр, социалисӑм строительствине вӑйлатса пыратпӑр. Ҫав принципсем тӑрӑхах ӗҫлесе, Ленин—Сталин партийӗ хамӑр ҫӗршывра тата пӗтӗм тӗнчере коммунисӑм патне малала пырать.

(„ПРАВДА" умстатйин, ҫенћаберӗн 10-мӗш).

Йединоличниксем колхоза кӗреҫҫӗ

Халӗ республикӑри пур районсенче те ССРС Верховнӑй Совечӗн Иккӗмӗш Ҫессийӗ йышӑннӑ саккунсем ҫинчен ӗҫсыннисене ӑнлантарса парасси пырать. ССРС Верховнӑй Советне тата РСФСР-па Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйлана вӑхӑтра ӗҫлевӗ агитаторсемпе пропагандиссем хӑйсен хисеплӗ ӗҫӗсене пӗр вӑрахлатмасӑр туса пыраҫҫӗ. Ҫӗнӗ Мӑнтӑр йалӗнчи (Вӑрмар р.) агитаторсен коллективӗ ССРС Верховнӑй Совечӗн Иккӗмӗш Ҫессийӗ йышӑннӑ саккунсене колхозниксемпе йединоличниксене ӑнлантарса парассине, йалхуҫалӑх ӗҫӗсене, хатӗрлев тата финанс планӗсене тултарассипе, тӳрӗ ӗҫлекен йединоличник хуҫалӑхӗсене колхоза кӗме пулӑшассипе ҫыхӑнтарса пыраҫҫӗ. Шуршӑл йалсоветӗнчи (Сӗнтӗрвӑрри р.) йединоличник хуҫалӑхӗсем хушшинче ССРС Верховнӑй Совечӗн Иккӗмӗш Ҫессийӗ йышӑнса хӑварнӑ саккунсем ҫинчен ӑнлантарса панӑ хыҫҫӑнах, Блӳхер йачӗпе тӑракан колхоза 16 хуҫалӑх, Пуснаркасси йалсоветӗнчи „Майӑн 1-мӗшӗ“ колхоза 14 хуҫалӑх кӗнӗ.

ССРС Верховнӑй Совечӗн Иккӗмӗш Ҫессийӗ йышӑнна саккунсем ҫинчен ӑнлантару ӗҫне лайӑх туса пыракан колхозсемпе йалсенче колхоза кӗрекенсен йышӗ пысӑк. Мӑн Сӗнтӗр йалсоветӗнче (Тутаркас р.) Иккӗмӗш Ҫессин решенийӗсене ӑнлантарса пама тытӑннӑ кунранпа 9 хуҫалӑх, Пӳшкӑрт йалсоветӗнчи „Ҫӗнӗ ҫул“ колхоза 4 хуҫалӑх, „Заря“ колхоза 8 хуҫалӑх кӗнӗ. Поваркасси колхоз правленине 8 хуҫалӑх 30 йедокпа колхоза кӗме зайавлени пырса панӑ.

Колхоза кӗнӗ хуҫалӑхсем хӑйсене колхоза илнӗ хыҫҫӑн тепӗр куннех коллективлӑ ӗҫе хутшӑннӑ.

Пирӗн ҫӗршыври кашни ӗҫсынни хресченшӗнех колхоз алӑкӗ уҫӑ. Кашни хресченех колхоза кӗрсе, кулљтуралӑ та пуйан пурнӑҫ ҫулӗ ҫине, социалисӑмлӑ ҫул ҫине тӑма пултарать.

Аванспа тырӑ тата укҫа параҫҫӗ

Шупашкар районӗнчи колхозсем тырпула ӑнӑҫлӑн пуҫтарса кӗчӗҫ. Чылай колхозсем авӑн ҫапса пӗтерчӗҫ. Государствӑна тырӑ парса татнӑ колхозсем колхозниксене ӗҫкунӗсем тӑрӑх аванс шучӗпе тырӑ пама тытӑнчӗҫ. Паникассинчи Молӑтӑв йачӗпе тӑракан колхоз кӑҫал вӑтам шутпа гектартан 16 центнӗр ҫурӑ тӗштырӑ туса илчӗ. Кашни ӗҫкунӗ тӑрӑх 8 килограм тӗштырӑ тата укҫан пама шутлаҫҫӗ. Халљ аванс шучӗпе икшер килограм тӗштырӑ, 30 пус укҫан валеҫҫе панӑ. Йакӑвлӗв ҫемйи 150 пӑт тӗштырӑ, 145 тенкӗ укҫан илчӗ. Зимин, Ҫеменӑвӑ, Федӑрӑвӑ, Ваҫилйӗв колхозниксен ҫемйисем ҫӗршер пӑт тырӑ, ҫӗршер тенкӗ укҫан илчӗҫ.

Йединоличниксем колхозра ҫеҫ пуйан та кулљтурлӑ пурнӑҫ тума май пуррине лайӑх ӑнланса илчӗҫ. Вӗсем колхоза йышлӑн кӗме тытӑнчӗҫ. Районри йединоличниксем хушшинче ССР Сойузӑн Верховнӑй Совечӗн Иккӗмӗш Ҫесси ӗҫӗсем ҫинчен ӑнлантарса парасси анлӑн сарӑлса пырать. Ҫавна май, ҫак кунсенче Калинин йачӗпе тӑракан колхоза ҫӗнӗрен 10 хуҫалӑх, „Смычка“ колхоза 6 хуҫалӑх, Туликасси колхозне 5 хуҫалӑх, Ҫатракасси колхозне 4 хуҫалӑх кӗнӗ.

Л. Ҫеменӑв.

Икӗ колхозӑн ӗҫӗсем

ШӐХАСАН. Вӑрман Йенӗшри „Ирӗклӗх“ колхоз „Ҫӑлтӑр“ колхозпа ӑмӑртса ӗҫлет. Халљ икӗ колхозӗнче те хӗрсе авӑн ҫапаҫҫӗ. „Ирӗклӗх“ колхозри Кондратйӗв йертсе пыракан виҫҫӗмӗш бригадӑ авӑн ҫапса пӗтерне, ытти бригадӑсем те ҫак кунсенчех авӑн ҫапас ӗҫе вӗҫлеҫҫӗ. Колхоз государствӑна тата машинӑ-тракторлӑ станцине тырӑ парса татнӑ.

Ҫак колхозсем государствӑ умӗнчи парӑмсене вӑхӑтра парса татас йенӗпе те пӗр-перинпе ӑмӑртаҫҫӗ. „Ҫӑлтӑр“ колхоз государствӑна тырпулсем парса татнипе пӗрлех, ҫӗнӗ займ укҫине, налогпа страховкӑ укҫисене те тӳлесе татнӑ.

Ӑмӑртура „Ирӗклӗх“ колхоз пур йенпе те малта пырать. Ҫавӑнпа вӑл йалсоветӑн куҫса ҫӳрекен хӗрлӗ йалавне илме тивӗҫлӗ пулчӗ.

Н. Михайлӑв.

Йединоличниксен йулса пымала мар

Йӗпреҫ. Йединоличниксем государствӑна тырӑ тӑратас тӗлӗшпе кайа йулса пыраҫҫӗ. Ку вӑхӑта ҫитсе те государствӑна тырӑ парас плана йединоличниксем йенӗпе 62 процент ҫеҫ тултарнӑ.

Упакасси, Чӑрӑшкасси, Кив Марат, Келӗмкасси йалсовечӗсенчи йединоличниксем государствӑна тырӑ тӑратас йенӗпе аван ӗҫлени курӑнать. Чурачӑк, Асаккасси, Клешкасси, Тимӗрчкасси, Ентрийал йалӗсенчи йединоличниксем государствӑна тырӑ тӑратмали обйазателствӑна 40 процент кӑна тултарнӑ.

Йалсовет председателӗсем ку ӗҫе хутшӑнмаҫҫӗ. Хӑшпӗр йалсоветсенче: „хатӗрлев ӗҫӗ пирӗн ӗҫ мар“ текен сийенлӗ шухӑш сарӑлнӑ. Йединоличниксем хушшинче ӗҫлесси йалсоветӑн ӗҫӗ пулса тӑрать. Государствӑна тырӑ тӑратас тӗлӗшпе йулса пыни пулмала мар.

Вишневский.

Канаш—Шупашкар чукунҫул строителствинчи стаханӑвла ҫирӗмкунлӑх

Вӑрнарпа Тӑвай районӗсенчи комсомолецсен ӑмӑртӑвӗ

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Обкомӗн бӳровӗ „Канаш—Шупашкар чукунҫул строителствинче стаханӑвла ҫирӗмкунлӑх иртересси ҫинчен“ постановлени кӑларсанах Вӑрнарпа Тӑвай районӗсенчи комсомолецсем строителствӑра ӗҫлеме бригадӑсем организацилесе тухма пуҫларӗҫ. Ҫентабӗрӗн малтанхи пилӗккунлӑхӗнче строителствӑра Вӑрнар районӗнчи „Ландӑш“ колхоз ҫамрӑкӗсен, Тӑвай районӗнчи „Звезда“ колхоз ҫамрӑкӗсен бригадисем ӗҫлеме пуҫларӗҫ.

Бригадӑсем ӗҫлеме тытӑнсанах ҫирӗмкунлӑх вӑхӑтӗнче нормӑна 150-шар процент тултарса пыма пулса, пӗр-перинпе социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва тухрӗҫ. Вӑрнар районӗнчен пынӑ Шитаков тата Йелчӗк районӗнчен пынӑ Димитрийӗв йулташсен бригадисем ӑмӑртса ӗҫлесе малтанхи кунсенчех лайӑх пахалӑхсем кӑтартрӗҫ. Комсомолецсем Девйатирикӑв, Павлӑв, Ҫеменӑв т. ыт. йулташсем нормӑна йалан тултарса пыраҫҫӗ. Бригадӑсенчи комсомолецсем пурте чукунҫулне вӑхӑтлӑх експлотацине париччене ӗҫлеме пулаҫҫӗ.

Л. Макҫимӑв.

Малтанхи пекех лӑпкӑ

ИШЛЕЙ. (Хамӑр корр.). Стаханӑвла ҫирӗмкунлӑхра Ишлей районӗн чукунҫул строителствинче куллен ӗҫлеме ҫураннисем 450 ҫын, лашалисем 50 ҫын организацилесе йамала. Стаханӑвла ҫирӗмкунлӑхӑн пӗрремӗш кунӗнче строителствӑра пӗтӗмпе те ҫураннисем 198 ҫын, платниксем 9 ҫын тата лашалисем 1 ҫын ҫеҫ ӗҫленӗ. Вӗсем те кӑнтӑрла иртсен ҫеҫ ӗҫлеме пуҫланӑ.

Строителствӑн участкисенче ҫирӗмкунлӑх хушшинче ӗҫлемели плансем ҫук. „Хӗрлӗ Иавӑш“ колхоз 5 ҫынран бригадӑ организацилесе йанӑ. Вӗсем малтанхи кун 24 мӗш километртра ӗҫлерӗҫ. Тепӗр кунне вара ӗҫ пулман пирки бригадӑна 11-мӗш километра куҫарчӗҫ.

Строителствӑ управленийӗ техникӑ йенчен йертсе пырас ӗҫе йӗркелемен. Строймаҫтӑр Соснин йулташӑн 20 километр хушшинчи ҫӗр ӗҫне туса пымала. Унӑн пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна ҫӳреме лаша ҫук. Ҫавӑнпа вӑл пур рабочисене те вӑхӑтра нарйадсем парайманст.

Райсойуз суту-илӳ ӗҫне йӗркелемен. Ишлейпе Катраҫ йалповӗсем рабочисене ҫӑкӑр ҫителӗклӗ тата вӑхӑтра тӑратмаҫҫӗ.

Ишлей районӗ ҫумне ҫирӗплетнӗ участкӑра агитаторсем, вулавҫӑсем пӗр ҫын та ҫук. Политикӑлӑ-массӑлӑ ӗҫ малтанхи пекех начар тӑрать.

М. Йакимӑв.

Пӗрремӗш кун

(Строителствӑ управленин сводки тӑрӑх)

Стаханӑвла ҫирӗмкунлӑхӑн пӗрремӗш кунӗнче чукунҫул строителствине ӗҫлеме пыракансен хисепӗ чылай ӳснӗ. Вӑл кун Шупашкар районӗнчен 50 ҫын, Ҫӗрпӳ районӗнчен 27 ҫын, Трак районӗнчен 47 ҫын, Шӑхасан районӗнчен 74 ҫын пынӑ т. ыт. те. Ҫапла вара ҫентабӗрӗн 10 мӗшӗнче чукунҫул строителствинче пӗтӗмпе 1750 ҫын ӗҫленӗ.

Ҫав хисеп ӗҫленипе пӗр кун хушшинче пӗтӗмпе 27.400 тенкӗлӗх ӗҫсем тунӑ. Ку малтанхи кунпа танлаштарсан (ҫентабӗрӗн 9-мӗшӗпе) 3.600 тенкӗлӗх ытларах ӗҫсем тунине ҫӗлтерет.

Анчах ку хисеп ҫителӗксӗр-ха. Чукунҫулне октабӗрӗн 1-мӗшӗ тӗлне вӑхӑтлӑх експлоатацине памала тума куллен 150 пин тенкӗлӗх ӗҫсем тумала. Апла тума строителствӑра кашни кун 4000 ҫын ӗҫлени кирлӗ. Ӗҫ вӑйӗ организацилес тӗлӗшпе Ишлей, Сӗнтӗрвӑрри, Ҫӗрпӳ, Канаш, Трак тата Шахасан районӗсен халех татӑклӑ улшӑнусем тӑвас пулать.

Каменщиксен пысӑк ӳсӗмӗсем

Пӗрремӗш участкӑ. (Хамӑр корр.). Ҫентабӗрӗн 10-мӗшӗнче каҫхине ӗҫ пӗтерне хыҫҫӑн Канаш—Шупашкар чукунҫул строителствинче стаханӑвла ҫирӗмкунлӑх пуҫланнӑ йатпа участкӑра ӗҫлекен Шупашкар районӗнчи колхозниксен, рабочисемпе инженерлӑ-техниклӑ работниксен митингӗ пулса иртрӗ. Митингра Шупашкар районӗнчи колхозсен тата йалсоветсен председателӗсем те пулчӗҫ.

Участкӑ началљникӗ Розанӑв йулташ стаханӑвла ҫирӗмкунлӑхра участкӑ умӗнче тӑракан задачӑсем тата ҫирӗмкунлӑхӑн пӗрремӗш кунӗн итогӗсем ҫинчен каласа панӑ хыҫҫӑн, ҫӗр чавнӑ ҫӗрте ӗҫлекен колхозник Демйанӑв йулташ сӑмах илет.

— Епӗр кунта чукунҫула октабӗрӗн 1-мӗшӗ тӗлне вӑхӑтлӑх експлоатацине памала тӑвассишӗн ӗҫлеме килтӗмӗр,—тет Демйанӑв йулташ.—Пуриншӗн те паллӑ, чукунҫула хута кӗртни хамӑр республикӑ хуҫалӑхне, хамӑрӑн пултурлӑха тата та хӑвӑртраххӑн ҫӗклесе пыма май парать. Ҫавӑнпа епӗр колхозниксем чукунҫула тунӑ ҫӗрте ӗҫлессине хамӑрӑн чыслӑ ӗҫ вырӑнне хуратпӑр. Епӗ стаханӑвла ҫирӗмкунлӑх вӑхӑтӗнче пӗр кун сиктермесӗр строителствӑра ӗҫлеме пулатӑп. Пур колхозниксене те ҫирӗмкунлӑха активлӑн хутшӑнса ӗҫлеме чӗнетӗп. Пурте пӗр кӑмӑлпа, хастарлӑхпа тытӑнсан чукунҫула срукра туса пӗтерессишӗн иккӗленмели те ҫук.

Митингра тухса каласакансем: И. Кузнецов, Николайӗв (ҫӗр чавакансен бригадинчен), Трифӑнӑв (Шупашкар районӗнчи „11 лет Октября“ колхозран), Старӑстин (Ҫӗнйал йалсовет председателӗ) тата ытти йулташсем те хӑйсем чукунҫула октабӗрӗн 1-мӗшӗ тӗлне туса пӗтерессишӗн хастарлӑн кӗрешме пулса колхозниксене, рабочисене ҫирӗмкунлӑха активлӑн хутшӑнса ӗҫлеме чӗнчӗҫ.

Митингра ПСК(б)П Шупашкар райкомӗн ҫекретарӗ Малљутин тата райӗҫтӑвком председателӗн заместителӗ Федӑрӑв йулташсем строителствӑна ӗҫ вӑйӗ кирлӗ чухлӗ организацилеме тата чукунҫул строителствинче ӗҫлекенсем хушшинче политикӑлӑ-массӑлӑ ӗҫе лайӑххӑн туса пыма пулӑшма пулчӗҫ.

Митинг стаханӑвла ҫирӗмкунлӑха активлӑн хутшӑнса ӗҫлеме пулса резолљуци йышӑнчӗ.

М. Титов.

Горький хулинчи Свердловски районӗнчи ОАХ райсовечӗ август уйӑхӗнче сывлӑшран тапӑннинчен сыхланассипе занљати ирттернӗ. ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: РОКК кружокӗ газсем йарса „амантнисене“ пулӑшас ӗҫре.

Г, Лычагин фото-ӳкерчӗкӗ (Сойузфото)

Малта пыракансен опытне сармала

(Хамӑр корреспондентран)

Канаш—Шупашкар чукунҫул строителствинче ҫак йулашки ҫур ҫул хушшинче ӗҫре ҫӗнӗ ударниксем ӳсрӗҫ. Ҫӗр чавнӑ ҫӗрте йе урӑх ӗҫсенче ӗҫленӗ рабочисем квалификацилӗ специалиссем пулчӗҫ. Хальхи вӑхӑтра малтан рабочи пулнӑ халӗ бригадир пулса ӗҫлекенсем 20 ҫын ытла шутланать, маҫтӑрсем, машиниссем, моториссем вуншарӑн шутланаҫҫӗ.

Ответлӑ ӗҫсене лартнӑ ҫамрӑк специалиссем паха тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ. Сӑмахран, иккӗмӗш участкӑри кӗпер тӑвакансен бригадинех илер. Бригадӑра виҫӗ ҫын. Ӗҫ вырӑнне тӗрӗс организациленӗ май, ку бригадӑ кашни кунах нормӑна 150—200 процент тултарса ӗҫлет, ҫентабӗрӗн 7-мӗшӗнче плана 208 процент, 8-мӗшӗнче—223 процент тултарнӑ. Бригадир пулса ӗҫлекен Йакӑв Шукайӗв йулташ малтанхи вӑхӑтсенче ҫӗр чавнӑ ҫӗрте, унтан шпалсем вырнаҫтарнӑ ҫӗрте ӗҫленӗ. Кӑҫалхи ҫулӑн май уйӑхӗнчен пуҫласа бригадирта ӗҫлет.

Кривцов, Царев, Некоз, Лаврентйӗв, Ваҫилйӗв, Алексейӗв йулташсен бригадисем те ҫав тӗрлӗ ырӑ тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ. Царевпа Некоз йулташсен бригадисем август уйӑх планне 205-шер процент, Кривцов йулташ бригади (ҫӗр чавакансем)—208 процент тултарнӑ.

Пур бригадӑсем те ҫакӑн пек ӗҫлесен строителствӑ планӗ чылайах хӑвӑрттӑн пурнӑҫланса пымала. Анчах II-мӗш участкӑра пайанхи куна пур бригадӑсенче те ӗҫе пӗр пек организацилемен. Хӑшпӗр бригадӑра материалсем, ӗҫ хатӗрӗсем ҫитмеҫҫӗ, тепринче ҫирӗп графиксем тӑрӑх ӗҫлемеҫҫӗ, нарйадсем вӑхӑтра тӑратмаҫҫӗ. Ҫавна пула тепӗр чухне простой та пулать.

— Епӗр нормӑна 250 процент ытла тултарма пултаратпӑр. Анчах пире хӑш чухне чул, улӑм ҫителӗклӗ тӑратмаҫҫӗ, ҫак ӗҫе чӑрмантарать,—тет кӗпер тӑвакансен бригадирӗ Шукайӗв йулташ.

Малта пыракан бригадӑсен опычӗсене ытти бригадӑсем хушшине сарасси те йапӑх пырать. Производствӑлӑ канашлусем туса ирттермеҫҫӗ, стаханӑвецсен ӗҫӗсем ҫинчен каласа памаҫҫӗ. Кӑтарту хӑми ҫине те йулашки вӑхӑтра ҫырса пымаҫҫӗ. Ӗҫлекенсем кам лайӑх ӗҫленине, мӗн чухлӗ ӗҫлесе илнине пӗлмеҫҫӗ. Массӑлӑ-ӑнлантару ӗҫне йӗркелесе йаман. Хӗрлӗ кӗтес ӗҫлемест.

Участкӑн хӑйне панӑ плана срукра тултарас пулсан, кашни кун 1000 ҫынна йахӑн ҫураннисем 400 лашапа ӗҫлемеле. Пайанхи куна пӗтӗмпе те 400 ҫынна йахӑн ҫураннисем 39 лашапа кӑна ӗҫлеҫҫӗ. Ӗҫ вӑйӗ тӑратассипе Ҫӗрпӳ, Канаш районӗсем ҫаплах начар ӗҫлеҫҫӗ-ха.

Хар. Лисин.

Театр сезонӗ

Ҫулахи вӑхӑт вӗҫленсе пырать. Театр сезонӗ ҫывхарса килчӗ. Акторсем те, куракансем те театрсен алӑкӗсем уҫӑлассине, чаршавсем ҫӗкленессине тата драматургӑн чӑнлӑхлӑ сӑмахӗ йанрама пуҫлассине чӑтӑмсӑррӑн кӗтсе тӑраҫҫӗ.

Йулашки ҫулта совет театрӗ ӳсӗмӗпе аталанӑвӗнче пысӑк вырӑн йышӑнса тӑракан ӗҫсем пулса иртрӗҫ. Реалисӑмлӑ театрӑн вырӑнӗ ҫирӗпленчӗ. Совет драматургӗсем аван пйесӑсем пачӗҫ. Совет композиторӗсем ҫӗнӗ операсем ҫырчӗҫ. Н. Погодин, К. Тренӗв, А. Корнейчук драматургсен произведенийӗсенче рабочисен тата хресченсен аслӑ ҫулпуҫӗн—В. И. Ленинӑн сӑнлӑхӗ пуҫласа сценӑ ҫине тухса тӑчӗ. Мейерхолљдӑн театрне хупни формалисӑма пысӑккӑн ҫапрӗ, творчествӑ работникӗсене пурне те формалисӑма хирӗҫ татӑклӑн кӗрешсе пыма кирли ҫинчен тепӗр хут астутарчӗ.

Искусствӑ ӗҫӗсене йертсе пыракан комитетӑн кивӗ руководствине улӑштарни пысӑк усӑ пачӗ. Искусствӑ работникӗсен ҫарӗ тӑшманӗсенчен тата вӑл ӗҫе ӑнсӑртран лекнӗ ҫынсенчен тасалчӗ. Искусствӑсен органӗсене, театрсене йертсе пырас ӗҫе ҫӗнӗ ҫынсем, хастарлӑ, ӗҫре тӗрӗсленнӗ, болљшевикла партипе Совет правителстви искусствӑ умне кӑларса тӑратнӑ задачӑсене пурне те пурнӑҫлас кӑмӑлпа хавхаланса тӑракан ҫынсем хутшӑнчӗҫ.

Ҫаксем пурте театрсене ӑнӑҫлӑн ӗҫлеме, малала ӳссе чечекленсе пыма чи лайӑх майсем туса параҫҫӗ. ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫумӗнчи искусствӑ ӗҫӗсен комитечӗ театрсен составӗсене ҫирӗплетесси ҫинчен, кашни вырӑнти театрта хастарлӑ, пӗтӗҫӳллӗ тата пултаруллӑ коллективсем тӑвасси ҫинчен кӑларнӑ приказ акторсен массине савӑнтарчӗ, вырӑнсенчи совет театрӗ ҫине пачах урӑхла пӑхма май пачӗ.

Халиччен вырӑнсенчи театрсенче пултарулӑх ӗҫӗ ӑнӑҫлӑ пуласси ҫинчен шухӑшлама йӑвӑр пулнӑ. Театрсенче нумайӗшӗсенче труппӑна пӗр сезонлӑх ҫеҫ пуҫтарнӑ. Акторсем пӗр-перне сахал пӗлнӗ, режиҫҫорсем акторсен уйрӑм пултарулӑхне шута илсе ӗҫлеймен. Ҫавӑнпа чылай театрсен постановкисем ҫӳлӗ пусӑма хӑпарма пултарайман.

Ҫакӑн пек театрсен ӗҫне куракансем час-часах килӗштерменни палӑрать. Ун ҫинчен куракансен ҫырӑвӗсем те, иртнӗ сезонра нумай театрсен залӗсем ҫурма-пушӑ пулнисем те лайӑх каласа параҫҫӗ.

Халӗ акторсем, сахалӑшӗсӗр пуҫне, хӑйсен вырӑнӗсенче йулнӑ, пӗр театртан тепӗр театра куҫса ҫӳресси кӑҫалхи ҫул сахалланчӗ. Малашне актор йаланах ӗҫлӗ пулать, вӑл ӗнтӗ хӑйӗн театрне йуратӗ, ӑна хӑйӗн мӗн пур пултарулӑхне пама тӑрӑшӗ.

Совет театрӗ умӗнче мӗнле творчествӑлӑ задачӑсем тӑраҫҫӗ-ха?

Н. А. Булганин ССРС Халӑх артистне К. С. Станиславскине пынӑ чухне Совет Сойузӗн правителстви йачӗпе тухса, совет искусстви пирӗн халӑха тӑвӑн ҫӗршывӑн тӑшманӗсене кураймин пулма вӗрентме, пирӗн ҫӗршывӑн гражданӗсене болљшевикла партин аслӑ идейӗсемшӗн, коммунисӑмӑн аслӑ ӗҫӗшӗн малала кӗрешсе пыма чӗнме кирли ҫинчен каларӗ.

Пирӗн театрсенче куракансем мӗлйуншарӑн шутланаҫҫӗ. Театрсем совет гражданӗсен сарлака массине паракан усӑ калама ҫук пысӑк. Пирӗн театрӑн куракансене коммунисла воспитани памала, коммунисӑмшӑн кӗрешессишӗн ҫирӗп тӑма, револљуцилӗ сыхлӑха хӑпартма тата халӑх тӑшманӗсемпе харсӑррӑн кӗрешме вӗрентмеле. Ку ӗнтӗ парти тата совет организацийӗсене чи малтан театрсен йертсе пыракан составӗшӗн ытларах тӑрӑшма хушать. Искусствӑна ҫӗнӗрен пынӑ ҫынсене пур йенчен те пулӑшу памала. Вӗсене куллен болљшевикла йертсе пымала, пурӑнма, ӗҫлеме тата искусствӑ тӗлӗшпе хӑйсен квалификацине ӳстерме кирлӗ условисене туса памала. Ҫав вӑхӑтрах театрсене ӑнсӑртран пырса кӗнӗ ҫынсенчен тата тӑшманла елементсенчен тасатас ӗҫе те вӗҫӗмсӗр туса пымала. Творчествӑлӑ ӗҫе ӑнланакан, ӑна йертсе пыма пӗлекен, акторсен коллективне хӑй хыҫҫӑн илсе кайма пултаракан тивӗҫлӗ ҫынсене лартса, совет театрӗсен йертсе пыракан кадрӗсене болљшевикла тимлӗхпе пулӑшса пымала.

Театрӑн кӑҫалхи сезонӗ ӑнӑҫлӑ пуласси́нче репертуар пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Театрсенче совет пйесисемпе, пирӗн драматургсен ҫӗнӗ произведенийӗсемпе ытларах интересленни палӑрать. Ку питӗ кирлӗ. Сӑтӑрҫӑсем совет пйесисен хакне тӗрлӗ майпа чакарма тӑрӑшнӑ, йурийех начар выљаса панӑ. Ку тӗлӗшпе улшӑну тумала. Класҫикла репертуара халљхи совет репертуарӗпе тӗрӗс ҫыхӑнтарни питӗ кирлӗ ӗҫ. Ҫавӑнпа пӗрлех тата совет пйессисен шучӗ ҫеҫ ӗҫе татса памине те асӑрхаса тӑрас пулать. Постановкӑсен принциплӑхӗпе болљшевикла идейӑлӑхӗ, постановкӑн ҫӳлӗ пахалӑхӗ тата кашни сӑвлӑх ҫинче тимлӗн, тарӑн ӑнланса ӗҫлени пулмала.

Пирӗн драматургсенчен халӗ нумайӗшӗ ҫӗнӗ пйесӑсем ҫыраҫҫӗ. Искусствӑ ӗҫӗсен комитечӗ ҫав ҫырса пӗтернӗ произведенисенчен ытларах килӗшӳллисене пичетлесе кӑларас ӗҫе васкать. Ун пек пйесӑсен шутӗнче ҫаксем хисепленеҫҫӗ: Погодинӑн—„Падь серебренная“, Паустовскин—„Созвездие гончих псов“, Катайӗвӑн—„Шел солдат с фронта“, Соловйовӑн—„Чужой“, Глебӑвӑн—„Марево“, Войтехӑвпа Ленчӑн—„Настоящая жизнь“, Голикӑвӑн—„Будни“, Делӗн—„Лукоморья“, Арбузӑвӑн—„Таня“, Михалковӑн—„Коньки“, Штокӑн—„Корень жизни“ т. ыт. те. Ҫакӑ ҫитес уйӑхсенче ҫав пйесӑсем „Искусство“ издателствӑра стеклограф ҫинче пичетленсе тухаҫҫӗ.

Вырӑнсенчи театрсем репертуара сарас тӗлӗшпе начар ӗҫленине палӑртмала. Ростоври Горький йачӗпе хисепленекен театр пек, Воронӗжри драмӑ театрӗ пек, Харљкӑври вырӑс драмин театрӗ пек, творчествӑ тӗлӗшӗнчен ҫирӗпленнӗ театрсен, тӑванла республикӑсенчи лайӑх театрсен хӑйсем тавра вырӑнти драматургсене пӗтӗҫтерме тата вӗсемпе пӗрле совет репертуарне пуйанлатма пултаракан ҫӗнӗ пйесӑсем тума майсем пур. Апла пулсан та вырӑнсенчи драматургсен вӑйӗпе питех ҫителӗксӗр усӑ кураҫҫӗ. Каплах, паллӑх, репертуар ансӑр пулать: тепӗр чухне пахалӑх тӗлӗшӗнчен пит ҫӳлӗ вырӑнтах тӑман пйесӑнах вуншар театрсенче лартаҫҫӗ. Класҫикла пйесӑсене суйласа илессинче те ҫавнашкалах хӑйулӑх сахал, репертуара ҫӗнетме тӑрӑшни ҫук. Час часах труппӑ мӗскер тума пултарнине, куракансем мӗскер ыйтнине шута илмеҫҫӗ.

Сезона уҫнӑ май, кашни театр репертуар малашлӑхӗ ҫинчен шухӑшлама тивӗҫлӗ: ҫулталӑкри репертуар планне труппӑпа пӗрле сӳтсе йавмала, акторсен вырӑнлӑ сӗнӗвӗсене шута илмеле. Йертсе пыракан организацисем час-часах театр ӗҫӗн ҫак йенӗпе сахал интересленеҫҫӗ, репертуар тени вӑл театрӑн сӑн-сӑпатне, унӑн куракансене килӗшмеле пулассине, партипе правителствӑ искусствӑ умне лартнӑ задачӑсене пурнӑҫа кӗртессине татса парать.

Пйесӑ тем пек лайӑх пулсан та, ӑна акторсӑр куракансем патне ҫитерме ҫук. Актор—театрта тӗп фигурӑ. Театр пахалӑхӗ—акторсен пахалӑхӗ. Ҫак пурне те ӑнланмала чӑнлӑха ӑнланманнине, акторшӑн тӑрӑшманнине, ӑна пултарулӑх тӗлӗшӗнчен ӳсме пулӑшманнине, воспитани пама тӑрӑшманнине палӑртса паракан фактӑсене нумай илсе кӑтартма пулать. Акторсемпе уйрӑмӑн договорсем тӑвас системӑ (халӗ ӑна пӑрахӑҫа кӑларнӑ) актор ҫине тӑрӑшусӑр пӑхма нумай пулӑшнӑ. Вӑл „сезонник“, театрти вӑхӑтлӑх ҫын вырӑнӗнче пулнӑ. Вӑл пӗр хӗллӗх килсе, сезон вӗҫне ҫитиччен пуранна та каллех тухса кайнӑ. Ҫавӑнпа та театр директорӗ сезонник акторшӑн питех тӑрӑшасшӑн та пулман.

Халӗ ӗнтӗ актор театра йаланлӑха ӗҫлеме кӗрет. Халӗ вӑл театртан тухса ан кайтӑр тесен, уншӑн тӑрӑшмала.

Сезон пуҫлансанах пур театрсенче те вӗренӳпе воспитани ӗҫне йӗркелемеле. Актор хӑйӗн квалификацине, хӑйӗн политикӑлӑ пӗлӗвне тата кулљтурлӑхне хӑпартасшӑн. Маҫтӑрлӑх ҫинчен, репертуара кӗртнӗ пйесӑсем ҫинчен, политикӑлӑ событисем ҫинчен лекцисем, калаҫусем, семинарсем ирттересси театрӑн йалнне кӗрсе вырнаҫмала. Актора воспитани парас тӗлӗшпе сахал та начар ӗҫленӗ, ҫакӑ вӑл ӗҫре пысӑк чӑрмавсем кӳнӗ. Чӑкӑлташма йуратакансем тата ҫемйеле „ушкӑнсен“ представителӗсем театрта тон парса тӑнӑ, творчествӑ ӗҫне чӑрмантаракан атмосферӑ тунӑ. Коллектива творчествӑлӑ пысӑк задачӑ тавра пӗрлештерни уйрӑм акторсен интересӗсене театр интересӗсемпе ҫыхӑнтарма, чӑрсӑрланакансемпе пуҫа ҫӳле ҫӗклекенсене йӗркене кӗртме, театрӑн пултарулӑ ӗҫне ҫӗклеме пулӑшать.

Акторсемпе пӗлсе усӑ курасси, ҫамрӑксене йӗркелӗн тӗ хӑйулӑн пысӑкрах ӗҫе куҫарса пырасси, ватӑ работниксен опычӗсемпе тата пӗлӗвӗсемпе усӑ курасси, театр ӗҫӗнче ҫирӗп йӗрке, ҫирӗп режим тӑвасси—ҫаксем пурте театр директорӗпе художествӑлӑ руководителӗн ӗҫӗсен шутне кӗреҫҫӗ. Пуринчен ытла театршӑн вӗсем ответлӑ пулмала.

Халлӗхе парти организацийӗсем акторсемпе музыкантсем тата художниксем хушшинчи политикӑлӑ массӑлӑ ӗҫ ҫинчен сахал шухӑшлаҫҫӗ. Профсойузӑн вырӑнсенчи комитечӗсем татах йапӑх ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсен задачи—театрта ӗҫлекенсен творчествӑлӑ пуҫарулӑхӗпе активлӑхне театрӑн тӗп задачӗсене пурнӑҫланӑ ҫӗре мобилизацилемеле.

Театр директорӗн, общественлӑ организацисен тата вырӑнти йертсе пыракан организацисен акторсене хватерсем туса парассишӗн тӑрӑшмала. Нумай театрсем уйрӑм ҫынсем тытса тӑракан суртсенче тата гостиницӑсенче акторсене валљли тара илнӗ хватерсемшӗн ҫулталӑкӗпе тӳлесе тӑрса ҫӗршер пин тенкӗ укҫа пӗтереҫҫӗ. Кашни ҫул ҫавӑн пек пысӑк укҫа пӗтериччен акторсем валљли уйрӑм суртсем тӑвасси ҫинчен шухӑшлама вӑхӑт, вӗсене йаланлӑх хватер пултӑр. Унсӑрӑн труппӑна упраса тытса тӑма, ҫирӗплетме йӑвӑр.

Пирӗн театрсем государствӑран кашни ҫул вуншар мӗлйун тенкӗлӗх дотаци илеҫҫӗ, анчах вӗсене тивӗҫлипе расходлама пӗлмеҫҫӗ.

Пирӗн куракансем хӑйсен театрӗнчен тивӗҫлипе нумай ыйтаҫҫӗ. Мӗншӗн тесен, пирӗн ҫӗршывра искусствӑна ӳсме питӗ пысӑк майсем пур. Театр коллективӗн, куракансемпе ҫыхӑну тытас тесен, хӑйне куракансем йуратчӑр тесен, куракан интересӗпе ыйтӑвне шута илсе ӗҫлемеле.

А. СОЛОДОВНИКОВ.

ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫумӗнчи искусствӑ ӗҫӗсен комитечӗн театрсен управленийӗн началљникӗ.

Лигă наци Совечĕн çеççийĕ

Çентаберĕн 9-мĕшĕнче Женевăра Лигă наци Совечĕн 102-мĕш çеççийĕ уçăлнă. Çеççин хупă ларăвĕнче Совет технически тата административлĕ ыйтусем тăрăх чылай решенисем йышăннă.

Лигă наци Совечĕн çеççине Женевăна Литвинăв йулташ, çавăн пекех тата совет делегацин членĕ— ССР Сойузĕн Францири полпречĕ Суриц йулташ пынă.

Çентаберĕн 10-мĕшĕнче пулнă кĕске уçă ларура Лигă наци Совечĕ чылай технически комитетсен отчочĕсене çирĕплетнĕ.

(ТАСС).

Чехословаки халăхĕ республикă никама пăхăнмасăр пурăнассине сыхласа хăварма хатĕр

Прагă хулинче рабочисен вунă пин çынлă пухăвĕ пулса иртнĕ. Пухăва компарти организацилене. Пуху йышăннă резолюцире правительствăран генлейнăвĕçсене уступкăсем парассине чарма тата правительствăн „наци ыйтăвне йĕркелесе йамали" çĕнĕ план текстне пăхса тухма парламĕнта пама ыйтса çырнă.

Массăлă пухусен, демонстрацисемпе стачкăсен хумĕ хăватлăн сарăлса пыни çинчен пĕлтерекен хыпарсем Чехословаки республикĕнчи мĕн пур облăçсенчен те пыраççĕ. Вăл пухусемпе демонстрацисене тата стачкăсене генлейнăвĕçсен провокацилĕ ĕçĕсене тата правительствă вĕсене уступкăсем парса пынине хирĕçлесе тăваççĕ.

Çемиле хулинче (Çурçĕр Чехи) 25 предприйатинчи рабочисем çентаберĕн 9-мĕшĕнче ĕçleме пăрахса, демонстрацине тухса кайнă. Вăл демонстрацине чехсемпе нимĕçсен фашисăма хирĕç кĕрешекен партийĕсем пуçарнипе тунă.

Моровска Острова хулинче (Моравийа) демонстраци пулса иртнĕ, унта 60 пин çын пулнă. Демонстрацире сывăхри йалсенчи хресченсем те пулнă.

Америкăри психолăгсен сйесĕ йышăннă решени

Нью-Йорк, çентаберĕн 9-мĕш. (ТАСС). „Америкăри психолăгсен ассоциацийĕн кашни çулах пулакан сйесĕ Колумбусра (Огайо штачĕ) резолюци йышăнна, вăл резолюцире сйес, наукăн мĕн пур отраçлисене пăсакан фашисăм ĕçесене хирĕç протеслесе, психолăгсен 1941 çулта Венă хулинче пулакан пĕтĕм тĕнчери черетлĕ конгресне мĕнле те пулин урăх çĕршыва куçарма ыйтнă. Резолюцире: „Психолăгсен пĕтĕм тĕнчери конгресне Венă хулинче пуçтарни наукăна хирĕçле вăйсене майлă пулнă пулĕччĕ" тесе çырнă.

Америкă çарĕнчи çĕнĕ винтовкă

Америкăри Пĕрлешўлĕ Штатсен çаренче йулашки уйăхсенче Джон Гаранд конструкцилене çĕнĕ винтовкăна сăнаса пăхнă.

Гаранд винтовки çурмаавтоматлă, пĕр минут хушшинче вăл 100 хут перет. Çак винтовкăпа хĕçпăшалланнă стрелок, пăшалпа перес хăват йенчен илсен, хаçат сăмахĕсем тăрăх, хальхи винтовкăпа хĕçпăшалланнă пилĕк стрелокпа танлашат. Çывăх уйăхсенче Гаранд винтовкине массăлăн туса кăларма пуçлаççĕ.

(ТАСС).

Григорйĕв бригади мала тухрĕ

Шупашкарти строительствăра Григорйĕв йулташ бригади паллă вырăн йышăнса тăрат. Бригадă йаланах паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлет, кашни кунах плана 200—250 процентшар тултарат.

Бригадă лайăх ĕçлени чăн малтанах бригадă членĕсем хушшинчи ĕç дисциплинине çирĕплетнинчен килет. Кашни рабочи ĕçе вăхăтра тухат, вахăтра кайат, кайа йулакансем йе прогул тавакансем çук.

Кувсăр пуçне тата бригадăра ĕç вырăнне тĕрĕс организацилене, материалсене вăхăтра тăратассине лайăх йĕркеленĕ. Кашни рабочи пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлет.

Строительствă коллективĕ Григорйĕв йулташ йертсе пыракан бригадăн паха ĕçне хакласа августăн 30-мĕшĕнче çак бригадăна куçса çўрекен хĕрлĕ йалав пачĕ, çавăнпа пĕрлех 500 тенкĕ укçа парса премилерĕ.

В. Димитрийĕв.

Ĕç вырăнĕсене тĕрĕс йĕркелемен

(Рабочи çырăвĕ)

Кусларкка комбинатĕнче ĕç вырăнĕсене тĕрĕс организацилесси пирки ку таранччен сахал мар каласнă. Анчах калаçнисем калаçурах йулаççĕ-ха. Çуртйер тăвакан цехра савалакан икĕ станок пур. Хăшпĕр чухне ку станоксемпе 30 кубла метр ытла савaласа кăлараççĕ. Ĕçлекенсене ан чăрмантарччăр тесе, савалана хăмасене çийĕнчех турттарса тăмала. Ку капла пулса пымаст. Хăмасем купаланса кайаççĕ, турттаракансем çук. Çавна пула вара иккĕмĕш сменăра ĕçлекенсене ĕçлес вăхăтра ахаль тăма, йе урăх ĕç тума лекет.

Типĕтекен цехра та, ĕç вырăнĕсене тĕрĕс йĕркелемен пирки типĕтнĕ материалсене цехсене вăхăтра тăра маççĕ, тепĕр чухне сменăсем перер сехет хушши типĕтнĕ йăвăça кĕтсе ĕçлемесĕр тăраççĕ.

В. Н.

„Тăван çĕршывăн телейлĕ кун çутине курса савăнатпăр"

Партипе правительствă халăх сывлăхĕшĕн тăрăшнипе халĕ Чăваш республикинче куçа сыватмали пульницăсем, трахпунктсем çĕршерĕн шутланаççĕ, кунсăр пуçне тата трахомран сывалмали институт пур. Епĕр Свердловски облăçран 800 çухрăма çити Чăваш республикинчи трахом институтне хамăрăн куçсене сыватма килтĕмĕр, ийунĕн 16-мĕш кунĕнчен пуçласа сывалма тытăнтăмăр.

Сывалакансем валли Институтра пите аван услови туса панă. Халь ĕнтĕ епĕр те сывалса çитетпĕр. Тăван çĕршывăн телейлĕ кун çутине сывă куçпа курса савăнатпăр.

П. Федулăв, Ф. Михайлăв.



Китайри вăрçă

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Китай артиллерийĕ позицире.

(Сойузфото)

Шăнкăртамсем пек ĕçлемеле

Çентаберĕн 1-мĕшне республикипе илсен укçа-тенкĕ пухмали плана 39,3 процент анчах тултарнă. Йулашки вунă кун хушшинче 14 процент ўсĕм тунă. ПСК(б)П Обкомĕ, ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата Финанс Халăх Комиссариачĕ кирлĕ мерăсем йышăннă хыççăн, ĕçре ўсĕм пулса пыни сисенет. Анчах та ĕç çителклĕ пымаст ха. Виççĕмĕш кварталăн икĕ уйăх иртре, плана 39,3 процент анчах тултарнă. Çак теле плана 65—70 процент тултарнă пулсан вăхăтлă пулатчĕ.

Шăнкăртам районĕ квартăл планне çентаберĕн 1-мĕшне 97,8 процент тултарчĕ. Кунта плана йалхуçалăх налогĕ йенĕпе 104,8 процент, окладлă страховани—107,8 процент, зайом—224,2 процент, культсбор—42,5 процент тултарнă. ПСК(б)П райкомĕн секретарĕ Валейев, райĕçтăвком председателĕ Сафиуллин тата унăн заместителĕ Каçимăв, районри финанс пайĕн пуçлăхĕ Феизăв йулташсем финанс активĕпе ĕçлеççĕ, налог агенчĕсене ĕçleме вĕрентеççĕ, пулăшса пыраççĕ. Çапла ĕçленине пула Шăнкăртам районĕ укçа-тенкĕ пухас ĕçре пысăк çитĕнў турĕ, республикре пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ.

Йĕлчĕк районĕнче те лайăх ĕçлеме пуçларĕç. Кунта плана 58 процент тултарнă, йулашки вунăкунлăхра 21,1 процент ўсĕм тунă. Парти организацийĕ, райĕçтăвком тата йалсовечĕсем, налог агенчĕсем финанс ĕçне лайăхлатмашăн çине тăрса тытăнчĕç. Зайом йенĕпе илсен плана 76,3 процент, окладлă страховани йенĕпе 65,5 процент тултарчĕç тата ытти те.

Йулашки вунăкунлăхра Пăрачкав, Трак, Кувакина, Вăрнар, Патăрйел районĕсенче малтанхинчен 20 процент ытларах укçа пухрĕç.

Анчах та кусем ĕçри малтанхи ўсĕмсем çеç-ха. Татах та лайăхрах ĕçлесе виççĕмĕш кварталти финанс планне пур тўлевсен йенĕпе те тултармала. Шăнкăртам районĕ ĕçре мала тухни укçа-тенкĕ пухмали плана пур вырăнсене те тултарма май пуррине кăтартса парат. Çапла пулин те нумай районсем йулса пыраççĕ.

Иплей районĕ республикре чи кайри вырăнта тăрат; плана 26 процент çеç тултарнă. Йулашки вунăкунлăхра 8 процент çеç ўсĕм тунă. Кусларкка, Йепреç, Канаш тата ытти хăшпĕр районсем те республикре кайала туртса пыраççĕ. Çĕмерле районĕнче ĕç пĕтĕмпех чарăннă темеле, августăн 20-мĕшĕпе çентаберĕн 1-мĕш хушшинче 6,3 процент çеç ўсĕм пулнă.

Тăваттăмĕш квартăл пуçланиччен шутлă кунсем çеç йулчĕç. Чылай районсенче финанс планне тултарасси пысăк хăрушлăх умĕнче тăрат-ха. Ĕçре Шăнкăртамсенчен пример илмеле. Финанс планне тултарассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлес пулат. Малтан пухмала пулнă укçасене пĕтĕмпех пухса çитермеле. Çак ĕнтĕ партипе совет работникĕсенчен, финанс работникĕсенчен тата налог агенчĕсенчен килет. Çине тăрса ĕçленипе виççĕмĕш квартăл планне пĕтĕмĕшлех тултарар.

И. Золотников.

Хайĕн ĕçне манса кайнă

КАНАШ. Асхва йалсоветĕнче укçа-тенкĕ пухас ĕç йапăх пырат. Çентаберĕн 1-мĕшне плана 13 процента йахăн çеç тултарнă. Укçа-тенкĕ пухас ĕç начар пыни — йалсовет йалти активпа сыхăнса ĕçлеменнинчен килет. Йалсовет членĕсем 55 çын. Вĕсенчен пĕри те укçа тенкĕ пухас ĕçе хутшăнман. Йалхуçалăх налогне, страховкă укçине хăйсем те пĕр пус та тўлемен. Налог агенчĕн йалти активпа таччăн сыхăнса ĕçлес пулат.

Йакăвлĕв.

Колхозниксем зайом укçине тўлеççĕ

ЕЛĔК. Чылай колхозсенчи колхозниксем Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайом укçине тўлесе татаççĕ. Тукач колхозĕнчи зайом уполномоченнăйĕ В. Гордейĕв йулташ тăрăшса ĕçлерĕ. Çентаберĕн 2-мĕшĕнче йалепе 400 тенкĕ пачĕç. Çавнашкалах налог укçине 768 тенкĕ, страховкă укçине 326 тенкĕ, йалхуçалăх налог укçине 311 тенкĕ парса татрĕç.

Матвейĕв.

Литературă вечĕрĕ çĕнĕ строительствăра

Стройкăри рабочисемпе работницăсем илемлĕ литературăпа çав тери интересленеççĕ. Вĕсен хăйсен хушшинче те йумахçăсем, калавçăсем, йурăçăсем пур (Çивкин, Анисимăв, Прокопйев, Фомин т. ыт. те.). Вĕсем пурăнакан бараксене ĕç хыççăн кашни каçсеренех нумай рабочисем, работницăсем пуханаççĕ: йурă йурлама, йумахсем калама ыйтаççĕ.

Постройком ыйтнипе чăваш совет писателĕсен сойузĕ çентаберĕн 9-мĕшĕнче çĕнĕ строительствăри рабочисем валли йатарласа литературă вечĕрĕ организацилерĕ. В-черта Уйăп Мишши, Нестер Йанкас, Митта Петĕрĕ йулташсем хăйсен произведенисене вуласа пачĕç. Итлеме пуханнă рабочисемпе работницăсем писательсене пите те хавасăн кĕтсе илсе хавасăн ăсатрĕç, малашне те час-часах çакнашкал вечĕрсем туса иртерме ыйтрĕç.

Тискер йăла

ЙЕТĔРНЕ. Улăх Шăмат йалĕнчи Михаил Тимофейĕв ĕлĕкхи тискер йăла тăрăх хĕр варлама шутланă. Вăл хăйен пўтсĕр ĕмĕтне пурнăçа кĕртнĕ те: кăçалхи августăн 28-мĕшĕнче ĕçсе ўсĕрĕлнĕ те, Й ваш йалĕнчи П И. йатлă хĕре вайпа трексĕрлесех варласа тухнă. П. И. хăй йуратман çын патĕнче пурăнма шутламан, килне ашшĕсем патне тухса тарнă. Анчах Михаил Тимофейĕв çул çинче хăвăласа çитсен, хĕр хулне хуçса пăрахнă. Халь П. И. пульницăра выртат.

Йалти халăх çак пўтсĕр етемĕ — Михаил Тимофейĕва суд урлă çирĕп ответ тыттарма ыйтат.

Ст. Вожарăв.

Почтальйон тирпейсĕрлĕхĕ

Ĕнер пирĕн редакцине черетлĕ почтă килсе пачĕç. Анчах „Тихоокеанская звезда" хаçат хушшинчен йăнăш адреспе килнĕ икĕ çыру сиксе тухрĕ. Пĕри—Карл Маркс урамĕнче 48 мĕш № çуртра пурăнакан Лиди Тепляковă патне, тепри—Профессурă çуртĕнчи Ольгă Йермовă патне çырнăскер.

Çакă ĕнтĕ Çыхăну çуртĕнчи почтă уйрăмĕнче гражданĕсен çырăвĕсене тирпейсĕр тыткаланине, çырусене унталa-кунтала перкеленине, ответлăха туймасăр ĕçленине кăтартса парат. Кун пекки вĕсен час-часах пулат.

ИЗВЕЩЕНИЕ

На 17 сентября 1938 года к 10 часам утра вызываются в Партколлегию КПК по ЧАССР (г. Чебоксары, Плеханова, 7) следующие товарищи:

1. **Рощупкин** Василий Савельевич— г. Чебоксары.
2. **Алексеев** Илья Алексеевич — г. Чебоксары.
3. **Либерман** Маси Давыдовна — г. Канаш.
4. **Комиссаров** Михаил Ефимович — Аликовский район.
5. **Майоров** Павел Ермилович — г. Канаш.
6. **Ястребов** Александр Семенович— г. Алатырь.
7. **Скворцов** Леонид Евлампьевич— г. Алатырь, Чуварлейский санаторий.
8. **Ерофеев** Зиновий Зиновьевич — с. Шемурша.
9. **Семенов** Сергей Семенович — Марпосадский район.
10. **Сяпукова** Магера Ибрагимовна— Марпосадский район.
11. **Орлова** Евдокия Яковлевна — г. Чебоксары.
12. **Александров** Михаил Александрович — Батыревский район.
13. **Степанов** Петр Степанович — Батыревский район.

Райкомам ВКП(б) просьба обеспечить явку вышеуказанных товарищей и выслать своих представителей.

ПАРТКОЛЛЕГИЯ.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

Шăхасан МТС-чи рабочисем, инженерла техникла работниксем тата служăшчисем МТС директăрĕн политикă йенĕпе ĕçлекен заместителĕ

Константин Иванăвич ТОЛМАЧОВ

Шупашкар пульницинче, кăçалхи çентаберĕн 11-мĕшĕнче 2 сехетре кăнтăрла, нумайранпа йăвăр чирлесе выртнă хыççăн, вăхăтсăр вилни çинчен хурланса пĕлтереççĕ.

Пĕччен пурăнакан кинотехнике

ПĔЧĔК ПЎЛĔМ КИРЛĔ

Кинотеатр директăрне пĕлтермеле.

ШУПАШКАРТИ ВЕНДИСПАНСЕРĂН

çĕрлехи профилакторийĕ

(Поликлиникă килкартинче)

КАШНИ НАÇАХ

12 сехетрен пуçласа ирхине 6 сехетчен ĕçлет

4—2

1938 ÇУЛХИ

Çентаберĕн 13-мĕшĕнчен пуçласа

ШУПАШКАРТИ

саслă кино-театрта

çĕнĕ, саслă, илемлĕ фильм

„За Советскую родину"

пулат

СЕАНССЕМ: 6, 8, 10 сехетсенче каçхине пуçланаççĕ.

Кассă кăнтăрла 3 сехетрен уçă

Çентаберĕн 12-мĕшĕнче

АЧАСЕМ ВАЛЛИ

саслă, илемлĕ фильм

„К А Р О"

п у л а т

Çеанссем 12 сехет те 30 минутра тата кăнтăрла иртни 2 сехетре пуçланаççĕ.

Кассă 11 сехет те 30 минутран уçă.

Дирекци.

Пĕр прогул историйĕ

— Мĕншĕн кульанатăн ес, Карсаков?

— Кам сана пăшăрхантарчĕ?

— Мĕншĕн хуйхăратăн, Михаил Алексейĕвич?

— Мĕншĕн?

Çак никама та кирлĕ мар ыйтусене хирĕç Михаил Алексейĕвич Карсаков нимĕн те чĕнмен. Чĕнме те кирлĕ пулман. Мĕншĕн тесен, çак „мĕншĕн хуйхăратăн" тесе ыйтакансем Карсаков валли хăйсем хуйхă тупса панă. Карсакова хăйсем пăшăрхантарнă, хăйсем кульантарнă вĕсем. Тата „мĕншĕн" тесе ыйтаççĕ. Кулаççĕ пулат ĕнтĕ. „Айăплă" çыннан мăшкăлаççĕ пулат.

Çак килĕшўсĕр ирони, çак чăтăмсăр мăшкăлăн историйĕ акă ăçтан пуçланнă.

Тĕрлĕ хаçатсенче çыркаласа тăракан пĕр корреспондент, Александр Ессен йатлăскер, ĕççĕр антăрана пулнă. Шупашкарти чылай учреждениссене кĕре-кĕре çўренĕ вăл. Йĕркесĕрлĕх шыранă. Шыранă-шыранă та, çав йĕркесĕрлĕхе суд ларăвне кĕрсе кайса тупнă. Халăх сучĕн ларăвĕ Михейĕв хушаматлă пĕр рабочин ĕçне пăхса тухнă пулнă. Михейĕв, Совет Сойузĕнчи гражданинсен пур прависемпе те усă курма пултараканскер. Карсаков йулташа защитнике тытнă. Айăпланакан па айăплакансенчен ыйтса пĕтернĕ хыççăн, суд Карсаков защитнике сăмах панă. Карсаков мĕн кирлине каланă. Михейĕвăн айăпне çăмăллатмашкăн ыйтнă, çăмăллатмали майсене тупса панă. Защитник сăмахĕ чи хыçалти йерре итлесе ларакан Александр Ессен корреспондентăн кăмăлне кайман. Итлесе ларнă-ларнă та вăл, защитник сăмахĕсен тĕллевне тĕплĕн тавçăрса илеймесĕрех, залăран тухса утнă. Килне çитнĕ-çитменех заметкă çырма ларнă. Унăн заметки „Слово имеет защитник Карсаков" йатлă пулнă. Вăл заметкă „Красная Чувашия" хаçатра, 1937-мĕш çулти ийунĕн 24-мĕшĕнче пичетленсе тухнă. Заметкă, Карсаков адрĕсĕпе хайар та хăватлă сăмахсемпе айлăн-çийлĕн пăтрашăнса тулнăскер „Коллектив защитников сделался убежищем всех негодных работников" тенĕ сăмахсемпе пĕтнĕ.

Çавăн пек пĕтнĕ заметкă. Çак пĕтмĕшĕнчен пуçланнă вара Карсаковшăн хуйхăлă истори.

Чăваш АССР Йустици Халăх Комиссарĕ заметкăра кăтартнă Карсаковăн айăпĕсене, вăл Михейĕв рабочине тĕрĕс мар хўтĕленĕ тесе палăртакан тĕслĕхсене, хăвăрттăн, хăвăрттăн та тĕплĕн тĕрĕслесе тухма хушнă. Ку хушăва защитниксен коллегийĕ кăмăлтан йышăннă. Тĕрĕслев ĕçне пуçăннă. Тĕрĕсленĕ хыççăн, паллах, пур йенчен те тĕплĕн тĕрĕсленĕ хыççăн, Карсаковăн нимĕнле айăп та тупăнман. Кун пирки наркома пĕлтернĕ. „Коллектив защитников сделался убежищем всех негодных работников" тесе пĕр вăтанмасăр лĕпĕртетсе пирĕн авторитета çĕртме тăрăшакан заметкă автăрне хăйне çирĕп ответ тыттармала ăна, тенĕ.

Нарком ўкĕте кĕмен. Коллектив сăмахне итлемен. Ĕненмен. Коллектив çине суйă корреспондент куçĕпе пăхат вăл. Унăн куçĕ умне пĕтĕм йурăхсăр çынсен коллективĕ тухса тăрат. Мĕн тумалла. Мĕнле кĕрешмеле вĕсемпе? Пĕр месает çеç—аппарата тасатмала. Ку ĕç йăвăрах мар, çăмăл та мар. Чи малтан пĕлес пулат вĕт. Аппарат мĕншĕн таса маррине, унта камсем ларнине кăштах та пулин чухлас пулат. Нулăтне пулат-ха та, çапах чухласшăн мар-ха нарком:

— Тĕрĕс,—тет вăл.—Заметкăра çырнă пулсан, пурте ĕнтĕ тĕрĕс. Карсаков — йурăхсăр коллективăн чи йурăхсăр членĕ. Кăларса пăрахас ăна.

Кăларат. 1937 çулти октаберĕн 29-мĕшĕнче нарком çырнă приказ тăрăх Карсаков ĕççĕр тăрса йулат. Карсаков кульанат. Хăй черерен йуратнă ĕçе туртса илни ăна теменле хаяр йапалана çухатнă пекех туйăнат. Жалăбă парат вăл. Хăвăртрах пăхса тухма ыйтат.

Чылай вăхăт иртет. Карсакова кăларса йанă нарком та хăйĕн ĕçне ĕретлĕн туса пыраймашăн вырăнтан тухса ўкет. Карсакова алă пама пуçлат. Тĕл пулмассерен: „Мĕншĕн кульанатăн", тесе „ырлăх-сывлăх" сунат.

Йустици Халăх Комиссариачĕ, Верховнăй суд тата Прокуратурă çумĕнчи местком нойаберĕн 16-мĕшĕнче Карсаковăн жалăбине пăхса тухат. Пăхса тухнă хыççăн, Карсаков айăплă мар, ăна ĕçрен тата защитниксен коллективĕн членĕнчен кăларни тĕрĕс мар, тесе резолюци йышăнат.

Карсаков кульанма чарăнат. Çĕнĕ нарком патне кайат.

— Ĕçе илетпĕр сана, — тет нарком, ачашшăн та йăвашшăн. — Анчах выгăвăр паратăп.

— Мĕншĕн?

— Ху пĕлетĕн. Мĕншĕн иккенне каласа тăмастăп. Выгăвăрпа килĕшетĕн-и? Вара ĕçе илетĕп.

...Вăхăт иртнĕçемĕн иртет. Карсаков çаплах ĕç илеймест. Çĕнĕ нарком та хăйĕн ĕçне ĕретлĕн туса пыраймашăн вырăнтан тухса ўкет. Карсакова алă пама пуçлат. Тĕл пулмассерĕн: „Мĕншĕн хуйхăратăн?" тесе „ырлăх-сывлăх" сунат.

Декаберĕн 22-мĕшĕнче вăхăтлăха нарком ĕçне туса пыракан Йевстропăв йулташ Карсакова хăй патне чĕнтерет. Карсаков хăйĕн хуйхи çинчен, ахалех выгăвăр пани çинчен каласа пĕлтерет.

— Ида... Интереснă,—тет Йевстропăв— Тĕрĕс мар выгăвăр панă. Йăлтах кăларса пăрахмала сана...

Приказ çырат. Тухса кайат Карсаков. Тепĕр икĕ уйăхран каллех тĕлпулат ăна Йевстропăв.

— Санпа калаçасшăнчĕ-ха епĕ, — тет вăл.—Ĕç тупса парасшăнчĕ. Суд исполнителĕ те пулсан пулас килемест-и санăн... Мĕншĕн кульанатăн?

Вăхăт иртнĕçемĕн иртет. Карсаков ĕçне тепĕр хут тĕрĕслеме комиссариатри аслă консультант аллине парат Йевстропăв. Консультант хăйĕн тĕрĕс те татăклă сăмахне калат: Карсаков йулташ защитник пулма пур йенчен те пултарат.

— Ида... Интереснă,—тет Йевстропăв— Хăйĕн иртнĕ çулхи приказне пăрахăçлат вăл. Кăçалхи май уйăхĕн 5-мĕшĕнче вĕрçĕнĕ приказ çырат. Карсакова ĕçе илмеле тăват.

— Тавтапуç,—тет Карсаков.—Ыранах ĕçе пикенес пуль?

— Тăхта-ха, тăхта.

Карсаков тăхтат. Май уйăхĕ иртет. Ийунь. Ийуль... Ийулĕн вĕçĕнче çеç ĕçе пикенет Карсаков.

— Çак хут çине алă пусса парăр-ха,— тет вăл.—Саккун тăрăх, укçа илмеле манăн... прогулшăн.

— Ида... Интереснă,—тет Йевстропăв. Нумай укçа... Пĕр çулталăкшăн сасартăк. Йурат ĕнтĕ. Парас.

П. Ламанас.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Канашри йалхуçалăх механизаци шкулĕ

МЕХАНИКСЕН тата ШОФĔРСЕН ОТДЕЛЕНИНЕ ВĔРЕНМЕ ИЛЕССИ ÇИНЧЕН ПĔЛ ЕРЕТ

Шкулта механиксен 18 уйăх, шоферсен 5 уйăх вĕренмеле. Шкула хĕрарăмсемпе арçынсене 18 çултан пуçласа 35 çула çитнисене шоферсемпе механиксем пулма сывлăх ситлекельсене илеççĕ. Механиксен отделенине вĕренме кĕрес текенсене политграмăтă, математикă, вырăс чĕлхи предмечĕсем тăрăх 5 çул вĕреннĕ чухлĕ, трактăр тата йалхуçалăх машинĕсен ĕçĕсем тăрăх трактăр отрăдĕнче бригадирĕсен курсĕнче вĕреннĕ чухлĕ ыйтаççĕ.

Шоферсен отделенине вĕренме кĕрес текенсем политграмăтă, математикă, вырăс чĕлхи предмечĕсем тăрăх испытани тытаççĕ.

Механиксен отделенийĕнче испытани çентаберĕн 15-мĕшĕнче, вĕренў занятийĕсем октаберĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ

Шоферсен отделенийĕнче испытани октаберĕн 1-мĕшĕнче, вĕренў занятийĕсем октаберĕн 15-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Вĕренме кĕрес текенсен çак документсене тăратмала:

1) МТС-рен йе колхозран тата учрежденирен илнĕ командировкă, 2) зайавлени, 3) мĕн чухлĕ вĕреннине кăтартакан свидетельствă, 4) ĕçленĕ çĕртен илнĕ характеристикă, 5) сывлăх çинчен пĕлтерекен справкă, 6) çасарг, йе çар кĕнекине хăйĕн кăтартмала, 7) шоферсен çара пуçăн ўкерĕннĕ 6 фотокартăчкă.

Шоферсен отделенине колхозсем йе ытти организацисемпе учрежденисем командировкă парса вĕренме йанă пулсан, вĕреннĕшĕн шкула 1.500 тенкĕ укçа тўлемеле.

Шкула вĕренме илнĕ курсантсене общежити, выртса тăмали вырăн, учебниксем, шоферсене 80 тенкĕ, механиксене 120 тенкĕ стипенди пaраççĕ.

Колхозсем тата ытти организацисемпе учрежденисем йанă командировкăпа вĕренме кĕнĕ шоферсем 1.500 тенкĕ тўлнĕ укçа шучĕпе услови илеççĕ.

Шкулта столовăй пур.

ДИРЕКЦИ.

3—1